# КАПКĂН

№ 8. Август. 1936 ç.
*Хакĕ 25 пус.*

## Танксемпе çăкăр

Ганф ўкерчĕкĕ „Крокодил“ журналтан.



Германире вăрçă хатĕрĕсем нумайланса пынă май ĕççыннисем çиес çимĕççем мĕн чухлĕ пулса пынине танлаштарса кăтартакан таблицă.

# Суйе чăптисем

Берлин хули. Мăнттай çуртăн çутă пӳлĕмĕ. Гитлĕр портречĕ умĕнчи капăр сĕтел хушшинче фашиссен хаçачĕн çекретарĕ ларать. Ручкă тытнă алли хут çинче хытсах кайнă. Мачанала пăхса илчĕ. Каллех кусне кĕтесселе тĕллесе хытса ларчĕ. Пит чиперĕн каснă çӳçне сăптăра-сăптăра илнĕ хыççăн, кусĕсем йăлкăшнă пек пулчĕç. Çекретар çырма тытăнчĕ. Нумай çыраймарĕ. Ручкине шартах сĕтел çине çилĕлĕн пăрахса, каллĕ-маллĕ пӳлĕм тăрăх утса çӳреме пуçларĕ. Пӳлĕме редактăр кĕнине те илтеймерĕ.

— Ну,—терĕ редактăр,—пайанхи номĕре Совет Сойузĕ çинчен суйă хыпарсем ытларах памалине манмарăн пулĕçке!

Çекретар ăна илтмĕш пулса:

— Уйав иртнĕ!—терĕ.

— Мĕнле уйав?

— Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен уйавĕ. Делегатсем тавăрăнчĕç.

— Мĕнле делегатсем?

— Мускава кайнă делегатсем.

— Хм!... Çыр: „Мускава пынă делегатсен хисепне бољшевиксем ӳстерсе каланă“,—те.

— Анчах унтан тавăрăннă делегатсем рабочисен собранийĕсенче Совет Сойузĕнчи çамрăксен пурнăçĕсем пирĕннинчен лайăххи çинчен каласа параççĕ.

—„Пурнăçĕсене ӳстерсе каланă“ тесе çыр.

— Апла та, анчах вĕсем унти çамрăксем пысăк хастарлăхпа социалисăм туни çинчен калаççĕ.

— „Хастарлăхне ӳстерсе каланă“ тесе çыр.

— Анчах вĕсем...

—Итле-ха! Миçе хут каланă сана... Ун пек чухне мĕнле çырмалине халĕ те вĕренсе çитеймерĕни-ха!..

Çекретар йăвăрăн сывласа илчĕ, сĕтел патнеле утса пырса пукан çине ларчĕ те, çапла сăмахсемпе çырма пуçласа йачĕ:

„Бољшевиксен çĕнĕ суйи.

Тĕнчери çамрăксен кунĕ иртрĕ. Бољшевиксем каланине ĕненсен, кăçалхи çамрăксен кунĕ 22-мĕш пулать. Ку пĕтĕмпех суйă. 22-мĕш тенине бољшевиксем ӳстерсе каланă. Пирĕн алла кĕнĕ чи тĕрĕс сведĕнисем тăрăх, тĕнчери çамрăксен уйавĕ пуçланса кайни пĕтĕмпе те çулталăк çурă çеç çитет“... тесе çырчĕ те, чăх-чăх кулса илчĕ. И.

# ВЫЉĂХ

— Иут шухăшлă етемсем ĕççыннисен ретне кĕрсе кайасран питех те сыхă тăмала, теççĕ. Анчах сыхă тăма пит йăвăрçке-ха. Сыхă тăрас ĕçре йăнăшсем пулма пултараççĕ.

— Мĕнле йышши йăнăшсем çинчен калатăн есĕ?

— Хăш-пĕрисем хăйсене аван тытаççĕ. Вĕсем çине нихăш йенчен пырса та çапăнса илмеле мар. Ĕçре аван, анчах вĕсен ăшĕнче хупхура троцкисла йун пулма пултарать.

— Ан хăра! Пурте сыхă тăрсан, ун пек елементсен ăшĕнче мĕн пуррине те тавăрса пăхĕç.

— Çăмăл мар çав тавăрса пăхма. Майне тупаймăн.

— Мĕншĕн?

— Çавăншăн. Сăмахран, ун йышши етем пирĕн хушăмăрта акă пуррине хамах пĕлетĕп. Вăл хăйне хушнă ĕçсене пурне те тĕплĕн туса пынă пек пулса пурăнать. Тĕрĕссипе илсен, вăл контр, троцкист, йут елемент.

— Кам çинчен калатăн çак есĕ?

— Кам çинчен каланипе санăн ĕç çук. Хушаматне каламăп. Вăл халĕ тытăннă пĕр троцкиспа пиТĕ туслă пурăнса иртерет. Хăйпе пĕр шухăшлисемпе калаçнă чухне кирек хăççан та партипе хирĕçсе калаçать. Çийĕнчен чăваша ним вырăнне хумасть. Йеврейсене пĕртте йуратмасть. Çавна, сыхă тăрас пулсан, тăрă шыв çине кăлармасăр хăвармала мар. Партирен те, вырăнтан та сирпĕтсех кăларса йамала ăна.

— Сирпĕтĕç те.

— Мĕнле сăлтав тупса сирпĕтсе кăларса йарĕç?

— Мĕнле сăлтавпа тетĕн-и çак есĕ? Ара, буржуйсем майлă ĕçлесе иртернĕшĕн, троцкисăмшăн, мошеник пулса пурăннăшăн, шовинисăмпа антиçемитисăмшăн.

— Ухмах, кам вăл апла çын иккене пĕлет-ха? Хăйĕн тусĕсемсĕр пуçне епĕ çеç пĕлетĕп. Апла пулсан, ун çинчен кам каласа парĕ?

— Мĕнле „кам“! Есĕ каласа парăн!

— Ухмаха йеретĕн-и мĕн? Ун пеккипе çыхланакан çын мар епĕ. Çийĕнчен тата партире те тăмастăп.

— Тăмасан та систерес пулать.

— Ой, пулмасть! Мана хирĕç мĕнле те пулин тавăрма пултарать вăл. Ачам-пăчамсем, арăм пур... пӳрт-çурт... Систересси манран пулмĕ.

— Апла пулсан кайса епĕ систерĕп.

— Есĕ мĕн çинчен систерме пултарăн-ха?

— Çакăнта есĕ халĕ каланисем çинчен.

— Ан ухмахлан! Унăн хушаматне те пĕлместĕн те, мĕнле систерме пултаратăн? Сана епĕ хушаматне каламанçке-ха, каламастăп та.

— Хушаматне санран ыйтса пĕлме хушăп. Вăл хушаматне те пĕлет, мĕнле-мĕнле ĕçсем тунине те тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлсе тăрать, тейĕп.

— Апла пулсан епĕ нимĕн те пĕлместĕп, нимĕн те сана каламан. Есĕ ху пуçунтан ăна шухăшласа кăларнă. Выљăх!

— Выљăх тесе кам çинчен каларăн çак есĕ?

— Сана выљăх, терĕм. Сысна есĕ! Йытă пичĕ! Ху манăн çывăх йулташ тетĕн? Сан пек етемпе, пĕлнĕ пулсан, калаçас та çук.

— Такам выљăх-ха. Такам йытă пичĕ-ха? Йытă та хăйне ырă тăвакан хуçине парăнса сыхлать, есĕ хăвна ырă пурнăç туса панă йĕркепе килĕшменнисене хăвăн ухмах çунатту айĕнче пытарса усрасшăн, сыхă тăрас ĕçе чăрмав кӳрсе тăратăн!—тесе йулташран уйăрлса кайрăм.

Ыран татах унпа тепĕре курăнса калаçма шухăш пур-ха. Хăй выљăхне пĕлмен выљăха май пур таранах ăнлантарса ăса кĕртес пулать. М.

# Пурнăç йумахĕсем

## Икĕ хут çуралнă ача çинчен

Çав-çав çĕрте çав çĕрте Хĕрлĕ-Чутай вăрман промхозĕн 5-мĕш №-лĕ складĕнче счетоводра ĕçлекен Фадейĕва Анастаçи, йумахра та мар, кăçалхи çулах, хăйĕн ачине икĕ хутчен йат хурса йалсовечĕн председателĕпе çекретарне ухмах Иван вырăнне тăратса хăварнă. Вĕсем пĕр ачанах 6 уйăх иртсен тепĕр йат хурса справкă панă. Наçтукĕ вĕсен ухмахлăхĕпе усă куракан пулнă. Малтанхи справкипе хăйĕн уйăрăлнă упăшкинчен Фадейĕвран алимент шыраса илнĕ, иккĕмĕш справкипе леспромхоз директăрĕнчен Коновалăвран алимент шыраса илме сута панă. Канцеляринчи ларнă çĕртех йумах йарса йăпанса ларакан председателпе çекретар тĕлĕк курнă вăхăтра Наçтук пĕртен пĕр ачине тăватă-пилĕк хут çутă тĕнчене çуратса справкă илме те пултарĕ.

Йумах йупа тăрне ан пултăр, йумах туппи прокурор аллине кĕрсе ӳктĕр.

## Чаплă хуралçă

Авалхи йумахсем „тет" тесе пуçланаççĕ. Хальхи çынсем „тет" хыççăн кайса йумахри шĕвĕрсем пек аташса çӳремеççĕ пурнăç çулĕпе.

Çĕрпӳ районĕнчи Шĕнерти „Глисĕр" колхоз правленийĕ йумахри йуман тăрине хăпарса лармасăрах ултă уйăх бригадирсен курсĕнче вĕреннĕ Фадейăва пăрса хуралçи туса хунă. Бригадирсем вырăнче курăсра вĕренмевнисемех ĕçлеççĕ.

— Пире мĕн, хуть курсра вĕреннĕ пултăр, хуть вĕренмен пултăр. Ĕçкунĕ пĕрех мар-и? — теççĕ правленирисем.

Пурнăç йумахĕн хӳрийĕ пăрнăç мар, колхоз правленийĕн те курсра вĕренсе тухнă çынсенчен пăрăнмала мар.

## Шăна йашки

Йумах йатăм йуптартăм, тетчĕç ĕлĕк асаттесем пăхăр чĕлĕмсене паклаттарса. Троицкăри „Свет" колхозра (Шăхасан р.) шăна йашки çитерекен столовăй çинчен йумах йарса та йуптарма çук. Столовăй пуçлăхĕ Проклăва Евдокийа столовайĕнче кĕтӳ-кĕтĕ ĕпе вĕççе çӳрекен шăнасене пĕтересси çинчен шухăшламасть те.

— Шăна мĕн вăл? Шăна кĕрсе ӳкни шапа кĕрсе ӳкнийех мар ĕнтĕ,—тесе шутлать пулĕ çав тирĕксем ăшĕнче йăваланса выртакан шăнасем çине пăхса.

Вăл шăнасем çине пăхтăр, тасалăх комиççийĕ Проклăвăн ĕçĕ çине пăхса самокритикă çатми çинче ăнлантартăр.

## Йупийĕ пур

Йупийĕ пур, пралуке çук? Çавă мĕн пулать?— тене пулĕччĕç авалхи йумахçăсем. Епĕр йумах йарса ларакансем мар та пĕлместпĕр унăн туппине. Çак йумахăн туппине пĕлес килекенсене Çĕрпӳри сыхăну уйрăмĕнчен ыйтса пăхма хушатпăр.

Çĕрпӳри çыхăну пайĕ виçĕ çул кайала Шĕнерпе Çĕрпӳ хушшине телефон карма йупасем ларттарчĕ. Телефон пралукне халĕ те кармаççĕ.

Пĕлме хĕн, те йумахри пек çутă хунарсем çакма шутлаççĕ çыхăну уйрăмĕнчисем, те çыхăну пайĕн пуçлăхĕ хăйĕн портфĕлне йупа çине çакса пĕтĕм халăха тĕлĕнтересшĕн?

## Филиппăв чĕлхи

Йумахсенче виçĕ чалăш тăршшĕ вутлă хĕмлĕ чĕлхесем çинчен каланă. Мартынкассинчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхоз председателĕн (Трак р.) чĕлхийĕ пĕр шит тăршшĕ пулин те сăмахпа пĕтĕм колхоза ыталаса илет. Çак чĕлхе: — Кăçал витнĕ итем туса пĕтерме сăмах паратăп, — терĕ март уйăхĕнче. Витнĕ итемĕ халĕ те çук. Пулас итем вырăнче 32 йупа çеç купаланса выртать. Авăн çапнă чух çумăр çума пуçласан Филиппăв хăйĕн чĕлхипе ыраш кĕлтисене витсе хума шутламасть-ши? — тесе ăнран кайрăмăр ĕнтĕ.



Пуп:—Шуйттан илесшĕ! Ĕнер кунĕпех ăшра Зиновйĕва, Камĕнĕва тата вĕсен йулташĕсене вăрăм ĕмĕр сунса çӳрерĕм, пайанхи хаçатра вĕсене персе пăрахмала туни çинчен пĕлтереççĕ.

# Каппай поет

Пӗр пысӑк мар „Ç" йатлӑ хулана, тепӗр „Ш" йатлӑ пысӑк хуларан пӗр çара йанахлӑ çын пынӑ. Вӑл тӳрех хула советне кӗнӗ:

— Епӗ çав хуларан, çав хаçат редакцинче ӗçлекен паллӑ поет, — тесе пӗлтернӗ.

— А-а-а... пӗлетпӗр, Каппай поет. Сӑввусене вуламасан та, сан çинчен илтнӗ. Каплипех çырса пырсан есӗ, пур поетсенчен те иртсе кайӑн-ха, — тенӗ сӗтел хушшинче хутсемпе кӗрешсе ларакан хула совет председателӗ.

Председателӗ мухтанипе, Каппай шӑварнӑ купӑста пек çӳлеле ӳснӗ. Ахаљ те вӑрӑм пулӗскерӗн пуçӗ чут маччана çитсе лекмен:

— О-о-о... пур поетсенчен те иртесси... Хусанкай çулне çитсен епӗ, тӗрӗс, унран иртетӗп, — тенӗ Каппай сӑмси вӗçне шуса аннӑ куçлӑхне тӳрлетсе лартса.

— Шӑп вӑхӑтлӑ çитрӗн-ха есӗ, Каппай йулташ! Кӗçӗр пирӗн клубра вечӗр пулать. Çавӑнта есӗ хӑвӑн сӑввусене пӗр-иккӗшне тухса каласан пит аван пулӗччӗ. Санӑн йату тата ытларах халӑх хушшинче сарӑлӗччӗ, — тенӗ председателӗ.

Каппай хӑй те сисмен, ӗнси хыçне катӑр-катӑр хыçса илнӗ:

— Вечӗрсенче сӑвӑсем калама пӗтӗм чунтан йуратакӑп. Анчах, председателӗ йулташ, кӗçӗр пултараймастӑп, мӗншӗн тесен, сӑвӑсен пуххи тетрадне илмен, киле манса хӑварнӑ. Ан ӳпкелӗр, — тенӗ Каппай айӑплӑн.

Председателӗ чӗнмен. „Е", çапла çав есӗр поетсем. Хӑвӑр çырнӑ сӑвӑсене хӑвӑр та пӑхмасӑр калаймастӑр. Поет мар çынсем йепле вулаччӑр вӗсене? Ху çапах пур поетсечен те иртесшӗн тӑрмашан. Пулмасть пуљ çав санран" — тесе шухӑшланӑ председателӗ. Унтан Каппай çине сивӗ куçӗпе пӑхса:

— Апла пулсан, мӗншӗн килнӗ вара есӗр пирӗн хулана? — тесе ыйтнӑ.

— Хамӑр хаçат валљи материалсем пуçтарма, — кӗскен тавӑрнӑ Каппай.

— Пуçтар еппин, — тенӗ председателӗ кӑмӑлсӑр пулса. Унтан сӗтел çинчи хучӗсене пуçтарса, шкапне хунӑ та, тухса кайнӑ. „Поет тесе каппайса çеç çӳретӗн пуљ çав есӗ. Санӑн хушаматӑ та Каппай" тесе шухӑшланӑ.

Каппай хула тӑрӑх хаçат валљи материал шырама тухса утнӑ.

II.

Каçпа клуба туллийех халӑх пуçтарӑннӑ. Каппай хула тӑрӑх материал шыраса çӳренӗ-çӳренӗ те ним те тупайман. Ӗçсӗр аптранипе "клубра материал тупӑнмӗ-ши" тесе, унта пырса кӗнӗ.

Пӗчӗк хулари çынсем пӗрне-пӗри паллаççӗ. Каппайа никам та палламасть. Çавӑнпа:

— Ӑçтан килнӗ! Кам ку?-тесе пӗр-пӗринчен ыйтаççӗ çынсем Каппай çине кӑтартса.

— Каппай хушаматлӑскер. „Ш" хуларан килнӗ. Хӑйне хӑй „поет" тет. Кам пӗлет ӑна? Ун пек Каппай, Машкай, Хускай... йатлӑ поетсем пирӗн республикре туллийех, шучӗ те çук, — тесе пӗлтернӗ председателӗ.

Çапла Каппайа клубри çынсем часах палланӑ. Пурте ун çине чалӑшӑн-чалӑшӑн пӑхнӑ.

Каппай пуçӗнчи шӗлепкине чалӑш лартса, йанахне каçӑртса калле-маллӗ уткаласа çӳренӗ. Ун пӗр-пӗр çамрӑк хӗрпе паллашас килнӗ.

Çавӑнпа çав вӑл час-часах хӗрсем çине куçӗсенӗ сирпӗтнӗ.

Нумайах та вӑхӑт иртмен, Каппай мӗн шухӑшлани çитнӗ. Вӑл хӑй те сисмен, ун умне пӗр кӑтра çӳçлӗ хӗр пырса тӑнӑ:

— Сирӗнпе паллашма пулать-и?—тенӗ хӗр йӑл кулса.

Каппай хӗр çине ӑшшӑн пӑхнӑ:

— Пулмасть, мӗншӗн пулмасть. Епӗ хам та çавна шыратӑп, — тенӗ Каппай мухтанарах. Çавӑнтах хӗре хулӗ айӗнчен çавӑрса тытнӑ: — Мӗн йатлӑ есӗр? — ыйтнӑ.

— Верӑ. Хӑвӑр мӗн йатлӑ? — тенӗ хӗр кӑшт вӑтанарах.

— Ман йат Гришук. Хушамат Каппай. Епӗ Чӑваш республикинче чи паллӑ поет. Есӗр вара ман сӑвӑсене вуламан-им?..

— Вуланӑ пулӗ те. Маннӑ. Халӗ председателӗ пӗлтерчӗ те, çавӑнпа паллашас терӗм, — тенӗ хӗр.

Çапла Каппайпа Верӑ часах паллашнӑ.

— Поетсм укçа пит нумай ӗçлесе илеççӗ тесçӗ. Чӑн-и вӑл? — тесе ыйтнӑ Верӑ алла-аллӑн тытанса утнӑ май.

— Ытти поетсене епӗ пӗлместӗп. Ман укçана чӑх та сӑхса пӗтерес çук. Хамран ытлашши виçӗ пин тенкӗ перекет кассинче выртать. Хӑш уйӑхра пин тенкӗ, хӑш уйӑхра ытларах та ӗçлесе илме пултаратӑп, — тесе мухтанать Каппай. Хӑй те сисмест пӗр чул катӑкӗ çине пат тӑкӑнать. Ури çине пӑхать: шеплечӗн тӗпӗ хӑпса кайнӑ, чӑлхи те çӗтӗк пулас, ури пӳрнисем курӑнаççӗ. Çавӑнпа Каппай кӑшт вӑтаннӑ пек пулнӑ. Çӗтӗк шеплечӗ çине хӗр куçӗ ӳкесрен хӑраса, сӑмахне тепӗр май çавӑрса йанӑ:

— Çӳре-çӳре шеплет çӗтӗлсе пӗтрӗ ӗнтӗ. Ниçта та лайӑх шеплет сутмаççӗ. Начарне илес килмест.

— Пирӗн магазинра питӗ лайӑх шеплетсем пур. Хаклӑ мар. Çӗраллӑ тенкӗ çеç, — тесе пӗлтернӗ Верӑ.

— Чӑнах-и? Апла пулсан ыран илес, — кӑшкӑрса йанӑ Каппай. — Унтан кӑсйине хыпаласа пӑхнӑ. Ах, манӑн вӗт пурӗ пӗр тенкӗ çурӑ укçам пур. Мӗнле киле тавӑрӑнса çитӗп-ши? Çитсен те... — шухӑшланӑ хӑй ӑшӗнче.

Верӑ утса çӳренӗ çӗрте шухӑша кайнӑ: „Укçалӑ çын. Авланнӑ-ши, авланман-ши ку?"

—Перекет кассинче укçа нумай выртать тетӗн? Апла сан çемйу çук пуљ? — тесе ыйтнӑ Верӑ сӑмах çавӑрнӑçӗ май.

Ку ыйтӑва хирӗç Каппай труках тавӑрман, мӗншӗн тесен вӑл икӗ ачипе арӑмне кунта киличчен малтан пӗр ерне ӗлӗк йала леççе пӑрахнӑ. Унтан тавӑрӑнсан: „Арӑмран уйӑрлтӑм" тесе мухтанса çӳренӗ.

— Çемйе çук. Пӗччен епӗ. Авланман-ха. Авланма хамӑн кӑмӑла йурӑхлӑ хӗр тупаймарӑм, — тенӗ Каппай ӳкнӗ сассипе.

Çакна илтсен Верӑ пӗтӗмпех шухӑша кайнӑ. Ун йепле те пулсан Каппайӑн кӑмӑлне йурасси килнӗ. Вӑл ун çумне пыл хурчӗ чечек çумне çыпӑç-

нă пек çыпăçнă. Ачашшăн нăйлатса калаçнă. Ăна Каппай часах чухласа илнĕ.

— Ак сан пек хĕр пулсан епĕ авланăттăм та, çук, — тенĕ Каппай йуптарса.

— Çук мар вĕт, — тенĕ Верă пăшăлтатса. Хăй пĕрех Каппай çумне çыпăçнă.

Каппай пирвайхи хут мар ĕнтĕ хĕрсене улталани. Çавăнпа вăрах шухăшласа тăман. Верăна йарса тытнă та, пуçне кайала каçăртса, тутисенчен ĕмсе чуптунă.

— Гришук, Гришук! Йурататăп епĕ сана. Есĕ ил мана качча! — тесе чух илтĕнмеле пăшăлтатнă Верă.

Çутăлса, хĕвел тухас умĕн тин вĕсем пĕр-пĕринчен уйăрăлнă.

— Малашне ĕнтĕ есĕ ман арăм пулăн, Верă. Епĕ киле кайса укçа илсе килем, вара туй тăвăпăр, — тенĕ Каппай йулашки хут чуптуса уйăрăлнă чух.

Верă Каппайăн сăйа сăмахне пĕтĕмпех шаннă:

— Йурĕ. Епĕ есĕ килнĕ çĕре сăра туса хатĕрленсе тăрăп,— тенĕ ачашланса.

Çапла Каппай, „хаçат валĵи материал“ тупса Верăран уйăрăлнă.

Верă хăйĕн туйĕ валĵи сăра туса хунă. Каппай илме пырасса кун иртнĕ, ерне кĕтнĕ, уйăх кĕтнĕ. Çук, Каппай поета кĕтсе илеймен.

„Ш“ хулари редакцине çыру çырса йанă. Çук, нимĕнле ответ та кĕтсе илеймен.

Йулашкинчен вара хаçат редакторĕ шеллесе çырса пĕлтернĕ: Каппай поет авланнă. Унăн икĕ ачи пур. Вăл сана ахалех „качча илетĕп“ тесе улталанă. Халĕ вăл пирĕн редакцинче ĕçлемест. Йалта, арăмĕ патĕнче пурăнать“.

Çакăн хыççăн вара Верă тинех улталанине пĕлнĕ. Хăйне-хăй айăпласа йĕнĕ. Чавса çывăх та, çыртма пит инçе пулнă.

Ăна Каппай поет ĕмĕр манми улталанă...

**Данилăв—Чалдун.**

## Арбуз илнĕ çĕрте



— Гражданин, тиркеме кирлĕ мар! Арбузĕ пиçсе çитнĕ, хĕпхĕрлĕ...

— Да „хĕпхĕрлĕ“. Пирĕн учреждениире те Самайĕв хăйне хăй хĕрлĕ сăнлăн курăнмала тытаччĕ, тĕрĕслесе пăхсан шурри, троцкист пулчĕ палăрчĕ.

# Мӳнхгаузĕн Автаркистана кайни*)

... Барон Мӳнхгаузĕн стакканне тултарчĕ те малала калаçма пуçларĕ:

— Хама Автаркистан утравне леçсе хăварма килĕшекен карап хуçине тупиччен, тусăмсем, пайтах ернесем иртсе карĕç. Автаркистан акăш-макăш пысак океан варринче ларать пулин те, унта кайма ытлашши йăвăрах мар. Анчах Автаркистан çынĕсем кашни çывхаракан йут патшалăх карапне хирĕç вăрçăпа тухнипе вăл утрава пурĕ те темиçе çулçӳревçĕ çеç кайса курнă. Автаркистан иртнĕ ĕмĕртех тĕнчере чи вăйлă суту-илӳ тăвакан патшалăхсенчен пĕри пулнă.

Шутласа кăларайми нумай пуйанлăх пынă вăл çĕршыва. Çĕр чăмăрĕн пур кĕтесĕсенче те Автаркистан патшалăхĕн карапĕсемпе таварĕсене курма пулнă. Автаркистан хăй те тĕнчери промышлĕннăçăн чи аван йапалисене сутăн илсе тăракан патшалăх пулнă.

Тĕнче вăрçи пуçланнă май авалхи пуйанлăхăн никĕсĕ те сиккеленме тытăннă.

Автаркистанра „Автаркистан автарксемшĕн" текен шухăшлă нацилĕ йухăм пуçланса кайнă.

Çак вăхăтран пуçласа Автаркистан хăй патшалăхĕнчи пурлăхĕсемпе çеç пурăнма тытăннă.

Çак кĕске умсăмах хыççăн, тусăмсем, епĕ сире хам çав тĕлĕнмеле çĕршыва мĕнле кайнине тата унта мĕн-мĕн курнине каласа парасшăн.

Автаркистанала кайас çул аван иртрĕ. Тăватăмĕш кунне ирхине айакра çĕр курăнма пуçларĕ.

Епĕр пурте карап арки çине тухрăмăр. Умра анчах тухса сарăлнă хĕвел хĕлхемĕ айĕнче йĕри таврах калама çук çӳлĕ çтенапа картласа çавăрнă утрав курăнса выртать.

Мана çӳлĕ стенинчен ытла темĕн çӳллĕш йатăнса тăракан хапрăк мăрйисем çумне калама çук пысăк саспаллисемпе „тохубоху" тесе çырни тĕлĕнтерчĕ. Пирĕнле каласан, вăл сăмах „Автаркистан таварĕсене ил" тенине пĕлтерет.

Пăртакранах пирĕн карап патне пĕр пысăках мар кимĕ пырса чарăнчĕ. Çыннисем пиртен епĕр мĕн тума килнине ыйтса пĕлчĕç.

Пайтах тата хĕрӳллĕн калаçнă хыççăн, тата епĕ: вăл патшалăхăн пур саккунĕсемпе йăлисене те пăхăнатăп, тесе сăмах парсан тин, мана пĕр кунлăха Автаркистана кӳртме пулчĕç. Пĕрре кĕрсен унта пурнас срука вăрăмлатма шанчăк пуррипе, епĕ вăл кĕске срукпа та килĕшрĕм.

Пирĕн пĕчĕк кимĕ гавăңь урлă питĕ хăвăрт каçрĕ. Гавăне карапсем чарăнса тăма çеç тунă пулмала, йĕри тавра пĕр çын травашĕ те курăнмарĕ.

Гавăңь варри тĕлĕнче каснă-лартнă авалхи самасенчи маклĕр сăнлă акăш-макăш пысăк памйатник ларать.

Мана илсе кайакан автарксĕм (Автаркистан çынĕсем) епĕ çав мăнтай памйатник умĕнче ӳксе пуçăпманнине кура тĕлĕнсе, хăраса ӳкрĕç. Вĕсен сăмахĕ тăрăх, çак арçын утрава упраса усракан тата автарксен тĕнне пуçласа йаракан Банкротус йатлă çветуй пулнă иккен, Банкротус пуçласа йанă тĕнĕн тĕп туртăмĕ тавар хакĕсене йаланах ӳстерсе пырса, вĕсене никам илейми хаклăлатса йарасси пулать, имĕш. Çав вăхăтрах ĕçленĕшĕн тӳлекен укçана пĕрмай чакарса пыраççĕ.

— Çапла туни - патшалăха пуйанлатмали пĕртен-пĕр çул, — тенĕ Банкротус.

Тĕлĕнмеле хаклăланса кайнипе таварсем сутăнми пулса магазинсене капланса тулсан, вĕсене Банкротус йăчĕпе памйатник патĕнче çунтарса йарса чӳк тăваççĕ. Банкротуса асăнса кашни кунах 60-70 шер пин килограм чи лайăх таварсене çунтарса йама пултарни автарксемшĕн мухтанмали ĕç пулса тăрать.

Карап çинче чухне мана автарксен çи-пуçĕ тĕлĕнтерчĕ. Шартлама сивве пăхмасăр вĕсем пурте çӳп çӳхе тумтирсем тăхăннăчĕ. Хăйсем те пуљницари етем шăмми пек ырханчĕ.

Патшалăхне çитсе кĕрсен епĕ пур Автаркистан çынĕсем те калама çук çӳхе тумтирсемпе çӳренине курсан, тата та ытларах тĕлĕнсе кайрăм. Çак тĕлĕнмеле йапалан сăлтавне мана кайарахпа тин ăнлантарса пачĕç.

Çĕр мамăкĕсĕр пуçне Автаркистанра пир-авăр тĕртмели нимĕнле чĕр тавар та çук. Шăп çав вăхătала вăл патшалăхра çĕр мамăкĕпе урамсем сармали май тупнă пулнă. Автарксем пĕлтернĕ тăрăх, Автаркистанăн пур çулĕсем те 20—25 сантиметăр хулăмĕш çĕр мамăкĕпе витĕнсе тăраççĕ иккен. Çапла туни, хăйсем, каларĕш, сулсем тăрăх çӳреме чылай çăмăллатать.

Çак истори мана ĕненме майĕ çук ухмахла йапала пек туйăнчĕ, анчах епĕ Автаркистанăн пур саккунĕсемпе йăлисене те пăхăнма сăмах панипе хам шухăшсене хыттăн каласран чарăнса тăтăм.

Çĕр мамăкĕн хакне калама çук ӳстерсе йанипе çĕр мамăкĕнчен тунă кĕпе-йĕмсемпе коçтӳмсене пур патшалăхĕпе те ик-виçĕ чи пуйан хуçасем çеç илме пултараççĕ.

Епĕр нумайах та кайайманчĕ, ман хăлхана сасартăк темĕскер çухăрни пырса кĕчĕ. Епĕ аптраса тăнине кура манпа йунашар пыракан чиновниксенчен йăвашрах сăнли вăл сасă ĕне мĕкĕрни пулнине пĕлтерчĕ. Çав темĕнле тунă вырăнта ĕне, йĕ вăкăр пĕр икĕ минут хушшинче çилĕм пулса тăрать иккен.

— Кашни уйăхрах 50 пин вăкăрсемпе ĕнесене аппаратсем хушшинче лапчăтса çилĕм йухтарса кăларатпăр, — терĕ чиновник мухтанчăклăрах сасăпа.

—Вăл тери нумай çилĕм мĕн тума кайать сирĕн? -- ыйтрăм епĕ.

— Ухмахла ыйту...—мăкăртатса илчĕ чиновник.— Утрав йĕри таврах километăр сарлакĕш çыран чавса çилĕмпе тултарнине пĕлместĕр-и мĕн есĕр? Ăна йут патшалăх çынĕсем утрав çине кĕресрен çапла тунă.

Тинех епĕ у рава кĕнĕ чухне епĕр мĕншĕн çтена айĕнчи пĕчĕк шăтăк витĕр кĕнине ăнласа илтĕм. Вăл шăтăк утрава, Автаркистан патшалăхне, кĕмели пĕртен-пĕр çул иккен.

Пĕр-пĕр йут патшалăх çынни хулана кĕрес тесен, „Смерть мухам" текен çуллă хут çине çы-

*) Ку калав Лондăнра (Англи) тухакан „Экономист" йатлă журналра пичетленсе тухнă. Унта автăр кризисран хăтăлас тĕлĕшпе капиталиссем мĕн хăтланнисенчен кулать.

пăсса ларнă шăна пек, çилĕм тултарнă шăтăкра асапланса вилет.

Чăннипе каласан, Автаркистан патшалăхĕ пусланнăранпа та вăл çилĕм шăтăкне никам та лексе курман. Çапах та утрав çынĕсем патшалăх сыхлăхне тĕреклетме кашни уйăхрах çилĕм тума 50 пин мăйракалă шултра выльăх парса тăраççĕ.

Йулашкинчен епĕр хулана пырса çитрĕмĕр. Автаркистан халĕ нихăш патшалăхпа та суту-илӳ тумасть. Çавăнпа епĕ хамăр çĕршывра чухне автарксен укçине тупса илеймерĕм. Халĕ епĕ тӳрех хулари банка кайса хам укçана автарксен укçипе улăштарса пама ыйтрăм.

— Ку мĕнле пĕчĕк картинăсем? — терĕ каççир ман укçана çавăркаласа пăхса.

— Картинăсем мар вĕсем, — тавăртăм епĕ çиленсе,—йут патшалăхра вĕсем кашнийех çĕршер тенкĕ ылтăн укçа хакне тăраççĕ.

Каççир мана итлесшĕн те пулмарĕ.

— Автаркистанра авалхи ĕмĕрсенче пулнă укçасем такçанах пĕтнĕ, — терĕ вăл. — Йапалапа йапала улăштарма пулать. Мĕн те пулин кирлĕ пулсан, сехетĕрпе, йе çĕрĕрпе улăштарса илме пултаратăр. Анчах полицисем аллине ан çакланăр, йут патшалăх таварĕсемпе суту-илӳ тунăшăн часах çакса вĕлерме пултараççĕ, — хăлхаран систерчĕ вăл мана шăппăн кăна.

Епĕ унпа сывпулашрăм та малала тухса утрăм. Банкран тухсанах сăмсана анчах çеç вĕретнĕ тутлă кофĕ шăрши пырса кĕчĕ. Ик-виçĕ уйăх выçă пуранна пек сасартăк хырăм тӳсмеле мар выçса кайрĕ.

— Кофĕ ăçта ĕçме пулать-ши кунта? — ыйтрăм епĕ урам кĕтессинче тăракан полицейскинчен.

— Кофĕ?.. ĕçме? — терĕ вăл ман çине ухмаха йернĕ çын çине пăхнă пек хăраса пăхса. — Кофĕ вăл сыснасене тăрантармали апат, унтан çынна вĕлермели газ та тума пулать. Ĕçме, тесен çук вара! Мĕнле çав таранччене ухмахланса кайнă-ха есĕр? Кофĕ вăл ĕçмели йапала мар вĕт.

Епĕ полицейскипе тавлашса тăни шиклĕреххине пĕлсе унтан кофĕ шăрши ăçтан тухнине çеç ăнлантарса пама ыйтрăм. Вăл пӳрнипе епĕ унччене курнă елес-мелес çӳллĕ хапрăк мăрйисен йенеле тĕллесе кăтартрĕ. Унтан вăл хапрăксем „Автаркистан промышлĕннăçне хăпартассишĕн тăрăшакан нацилĕ ассоциацийĕ“ текен организацийĕн иккене пĕлтерчĕ.

— Вăл хапрăксенче питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ, — терĕ малала, калаçма йуратакан чиновник. — Вĕсем хамăр патшалăхра тăвакан тĕрлĕ апат-çимĕçсене пĕтермели çĕнĕ меслетсем шыраççĕ. Хальĕ ассоциаци тропикра ӳсекен çимĕçсене ĕрчетме анкарти пек пысăк пахчана типĕ кофĕпе хутса ăшăтать. Вăл ĕçе тытăнни уйăх ытла ĕнтĕ.

Епĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм:

— Апла сире калама çук хакла ларать вĕт! — терĕм епĕ.—Ма есĕр вĕсене çав çимĕçсем пулакан патшалăхсенчен кӳместĕр? Халь вутă вырăнне çунтаракан кофĕпе те темĕн чухлех улăштарса илме пулĕччĕ.

Вилес пек хăраса ӳкнипе полицейски темиçе минут хушши пĕр сăмах чĕнеймесĕр хытса тăчĕ. Тăнĕ кĕрсен, вăл мана хăй хыççăн утма хушрĕ. Çывăхри полици участкинче мана турра мăшкăласа Автаркистан саккунне пăснăшăн çакса вĕлермеле туни çиччен пĕлтерчĕç. Хам йут патшалăх çынни пулнипе кăна, тусăмсем, вилĕмрен хăтăлса йултăм.

— Аçтан килнĕ—çавăнтах кай, — терĕ мана пахча мĕлки пек ырхан начальник. — Халех тасал?... Çур сехет хушшинче кайса ĕлкĕреймесен, çилĕм шăтăкне тытса перетпĕр...

Епĕ гавань йеннеле тухса утрăм. Çула май епĕ урамсенче çынсем тем ĕçсе тăнине асăрхарăм. Ĕçеççĕ — ĕçеççĕ те, чул çтенана çуласа илеççĕ, унтан татах ĕçеççĕ...

Кусем турра çапла кĕлтăваççĕ пулмала,— шухăшларăм епĕ. Çапах та иртсе пыракан çынран тĕплĕреххĕн ыйтса пĕлес килчĕ. Вăл каланă тăрăх, 1933-мĕш çулта вĕреннĕ çынсем сахăр хутăштарсан цемĕнт çирĕпленнине пĕлнĕ пулнă. Çакăн хыççăн сахăр хакĕ калама çук ӳссе кайать. Сахăрпа чей ĕçекенсем патшалăхĕпе те 7-8 пуйан хуçа кăна йулнă. Чухăнсем чей ĕçнĕ вăхăтра сахăрпа хутăштарса купаланă çурт çтенисене çуллаççĕ.

Çитет! Автаркистан çынĕсем ухмахланни мана йулашкинчен шиклентерме те пуçларĕ. Епĕ пиçиххийе хытăрах туртса çыхрăм та, пĕр çаврăнса пăхмасăр хамăр карап тăракан йал йеннеле вĕçтертĕм...

Мӳнхгаузĕн калаçма чарăнса стакканне ӳпĕнтерсе хучĕ.

— Ку историйе ĕненме йăвăртарах, — терĕ Мӳнхгаузĕнпа пĕрле ларакансенчен пĕри. — Есĕр йаланах суйатăр...

— Автаркистанри пурнăç çинчен суйрăм пулĕ тетĕр-и есĕр? Хăш чухне епĕ хам калавсене, тен, илемлĕлетме те тарăшатăп пулĕ. Анчах пайан, тусăмсем, хам курни илтни çумне нимĕскер те хушмарăм. Сире каласа пани—тĕрĕсрен те тĕрĕс истори...

Мӳнхгаузĕн тепĕр стаккан ерех тултарса ĕçрĕ те килнеле тухса утрĕ.

Вырăсларан Хветĕр У. куçарнă,



— Часрах çийĕпĕр те, çăмарта тума кайăпăр. Пирĕн хуçа 10 çăмарта укçипе хăйĕн кил-йышĕ валли çулталăклăх „Капкăн“ илме шухăшлать.




### *Сывă-и, Антонăвпа Умов.*

Çакă çырăвăн пуçламĕшĕнчех сирĕн аллăрсене чунтан вартан йуратса „Капкăн“ пĕкечипе шăтăрт! темен шăмă йулмиччен çемçен чăмăртатăп.

Хаклă йулташсем, пĕтĕм ăслăлăх сирĕн аллăрсене кĕрсе ўкрĕ ĕнтĕ. Ывçă тупанĕсене хыпашласа пăхăр-ха: унта ытти кунсем ерех кĕленчи йăваланса выртнă çĕре пĕр-пĕр çĕнĕ открытисем кĕрсе выртмăн-и? Пĕтĕм чĕререн, ўпке пĕвертен савăннипе епĕ пĕтĕм халăха есĕр çырнă справкăпа тĕлĕнтерсе телейлĕ тăвасшăн. Есĕр вăрман тăманисем çинчен шухăшласа ларнă вăхăтра çырнă хут акă вăл:

Справка.

Гр-ка пос „Волга“ Н-Кумашкинского сельсовета Шумерлинского района Нидеркина Зоя Григорьевна рождение 3 декабря 1936 года

Что и удостоверяется.

Настоящая выдана для представление в учебное заведение.

Пред. селсовета *Антонов*

Секретарь *Умов*

25 мая 1936 г.
№ 1—11—3

Ну, тутусем хăлха патнех çитрĕç пулĕ хăвăр çырнă хутăн чаплăлăхне курсан. Есĕр тăрăшнипеле çуралман çынсенех хут вĕренме йама пулаť иккен. Мĕнле, Антонов йулташ, йăвăр çын хĕрарăмсен ачисемпе пуринпе те калаçса пăхнă-и? Вĕсем те тен çураличчен 7—8 уйăх малтан справкăсем илесшĕн пулĕ. Тăрăшакан çын есĕ, никама та вĕрентмесĕр ан хăвар. Мĕн сана шеллĕ-им шурă хут? Акă епĕ авланман та, авланас тетĕп, анчах та çав пулас арăмăн çуралас ачийĕ вĕренме кайатех пулĕ тетĕп. Çавăнпа та есĕ ачи çуралачченех справкине çырса хатĕрле-ха, пичетне те пусса хăвăн хушаматна шăши хўри пек шурă хут çине чĕркелесе хур. Ех, сана епĕ кăна мар, пĕтĕм халăх савса урра çĕклĕччĕ. Сисетĕн-и, есĕ йепле усăлă ĕç тăватăн?

Мĕнле тата, çак çуралман хĕр сирĕн çĕнĕ вĕренў çулне мĕнле хатĕрленме шутлаť: йе пĕр-пĕр института кĕчĕ-и вăл, йе пĕр-пĕр пуçламĕш шкула? Çавăн çинчен тархасшăн пĕлтерĕр, пĕлтересех килмест пулсан та, хăвăн пуçăрсене шаккаса пире илтĕнтерĕр.

### *Капкăнла салам!*

Сисетĕн-и, Волкăв, сана саламлатпăр вĕт, чыс туса санăн ўпке-пĕверўсене савăнтаратпăр. Есĕ савăнăççăр ĕç тунипе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕчкей колхозĕн кролик ферми çĕр нимине путса çухалнă, тет ав Йалокин йалкор. Çапла калани тĕрĕс-и, колхоз предçедателĕ йулташ, тĕрĕс мар пулсан пире çырса пĕлтерессе шанса ларатпăр. Колхозниксем тăрăшнипе кролик ферми уçни çинчен те, кăçалхи çул 30 кроликрен пĕр кролик йулманни çинчен те çыр есĕ.

— Колхоза тĕп тăваť ку фермă. Вите ту, апат хатĕрле. Инкек... тесе шухăшлакан пуçна пире килсе кăтартсамчĕ есĕ: питĕ тĕлĕнмеле пуç пуђ вăл санăн. Есĕ тата çывăрма выртсан вилсе пĕтнĕ кроликсене курса савăнатăн мар-и çав? Савăнатăн пулсан пире те савăнтар-ха, савăннă май пĕрре „йĕплĕ çăмах“ хыптарса пăхтарăпăр сана. Есĕ вара çырса пĕлтер: кролик ашĕ тутлăрах-и йе „йĕплĕ çăмах“ аванрах-и?

Çыр, çырас килмесен те çыр.

### *Вывĕскă çыракансем!*

Тавтапуç сире, Патĕрйелĕнчи ăслă çынсем, есĕр çырнă вывĕскăсене курман пулсан епĕ вывĕскăсем çырма вĕренмен те пулнă пулăттăм. Есĕр çырнă вывĕскă акă вăл:

*Аслă Патĕрйелĕнчи патшалăхăн çăкăр пеçерекен*
Пекарня

*Больше Батыревская...*

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ак тамаша, мĕнле Патĕрйелĕнчи патшалăх? Мĕне пĕлтерет ку? Куçсем йăнăш кăтартрĕç пуђ тесе куçсене чарса тепĕр хут вулатăп. Çавах. Нимĕн уйрăмлăхĕ те çук. Пĕр вывĕскине вуласан ытти вывĕскисене те вулас килсе кайаť. Вĕсенче те „Аслă Патĕрйелĕнчи патшалăх“ тени пур.

Çук, вулакан йулташ, Патĕрйелĕнчи пекарњăра ĕçлекенсем „А. Патĕрйелĕнче патшалăх“ пур тесе хуť те йепле ĕнентересшĕн пулсассăн та, Патĕрйелĕнче нимĕнле уйрăм патшалăх та çук. „Пĕçерекен“ сăмах вырăнне „пеçерекен“ тесе çырмаççĕ. Чăвашлине çырсах пĕтернĕ пулсан вырăслине „Больше Батыревская“ тенĕ сăмах хыççăн нумай пăнчăсем лартса кайнине мĕнле вуламала-ши? „Больше Батыревская пăнчăсем“ тесе-и, йе „йалкуллиле ĕçлекенсем“ тесе-и?



# Почтă чĕлхи

(*Канаш почтине сума суса çыратăп*)

Пĕр сехет çурă хушши упа йăвăç тункатине кăкланă йеверлĕ мекĕрленсе, асапланса çыру çырнă хыççăн хама хам çамкаран çат! тутартăм та:

— Стоп, Микулай ывăлĕ Митрахван, çырăва пайанах йарас пулат̆ вĕт. Ахалĕн Кавуçăн чĕри çатма çинче ăшаланă кăвăрчă пек кукăрланса ларĕ, — тесе çухăрса йатăм.

Епĕ çухăрса йанă сасса илтсе йунашар пÿлĕмре пурнакан квартирантăн пиллĕк уйăхри ывăлĕ ыйхăран вăранса а-у, а-у! — теме те пуçларĕ.

— Ну, мухтаннă пек çухăрат̆ тата. Авлансан акă хамăн та сан пек çухăракансем дйужинех çитĕç-ха, — тесе, пÿлĕмрен тухса утрăм. Манăн ĕнер çеç илсе сырнă çăпата пуçĕ почтă йенеле пăрăнчĕ. Епĕ почта çыру йама кайатăп еппин.

Канаш почтине çитсе кĕтĕм. Куç-пуç чарăлса кайрĕ: йĕри таврах пĕчĕкçеç чÿрече. Кашни чÿречи умнех вывĕскă çырса çапнă. Вывĕскийĕсем хитре хĕрĕн çÿхе тутийĕпе илемлĕ куçĕ йеверлех илĕртеççĕ сана. Конвертпа маркă илес тесе пĕр чÿречи умне пытăм та:

— Конвертсене кунта параççĕ-и? — тесе ыйтрăм пĕр çинçешке старикрен.

— Мĕн? — терĕ вăл ман çине пăхса, — мĕн ыйтатăн, авă вуласа пăх вывĕскă çине...

Кăвак куçăмсем хулăм карăнтăк çине хĕрлĕ сăрпа çырнă рекламăсем çине тăрăнчĕç.

— Аха, чăвашлах çырнăске. Аван, аван, — тесе пĕр вывĕскине вулама пуçларăм: „Телефонпа калаçакансен заказсене йышăнаççĕ, билетсем тăрăх корреспондентсем параççĕ.“

— Мана корреспондент таврашĕ кирлĕ мар, кăпĕр-пĕр районри хаçатсем кирлĕ пулсан килсе илсе кайччĕр корреспонденчĕсене, — тесе стойкă урлă карăнса пăхатăп. Ниçта та нимĕн те курăнмаст̆.

— Корреспонденчĕсене мĕнле билет тăрăх параççĕ-ши, — тесе нимĕн ăнланмасăрах малала утрăм вара. Çапла вара хаçат çине çыракан çынсене билетпа илме май пуррине тин çеç ăнлантăм.

Мăкăртаткаласа тепĕр чÿречи умне çитсе тăтăм. Куç умĕнче калех вывĕскă. Вулатăп: „Йаракан укçасене хаклă çырусене поссылкăсене килĕрен кирлĕ йаравсене тÿлевлĕ йаравсене илеççĕ, — тесе çырнă. Вуласа тухнă хыççăн çамка тирне картлантарсах шутлатăп, анчах „йарав“ мĕн иккенне нийепле те пĕлейместĕп. Почтăра ĕçлекеннинчен ыйтса пĕлес шутăм пурччĕ те, анчах, ку çын ликпунктра вĕренмесĕр йулнă тесе пуçламĕш шкула хут вĕренме леçсе йарасран хăрарăм. Вара алла султăм та тепĕр вывĕскине вулама утрăм. „Хаçат журналсен подписчĕкĕсене çыраççĕ“, — тенĕ вывĕскă пулчĕ куçăм умне.

— Çырĕçин, мĕн ĕç манăн вĕсемпе. Анчах хаçат журнал подписчĕкĕсене мĕн çине çыраççĕ-ши, — тесе пуçа чиксе малала утрăм.

Акă ĕнтĕ манăн умра йулашки вывĕскă. Вывĕски çине çапла çырнă: „Закасла çырусене маркасăр йанă çырусене ыйтуллă çырусене телекрамсене илеççĕ“, — тенĕ унта. Хăвăртрах васкаса маркăпа канверт илтĕм те çырàва пуштă йешчĕкне йатăм.

Почтăран тухсан хаш! хуйхăрса йатăм.

— Ех, Матруне упăшки Митрахван, есĕ тăватă çул Шупашкарта пурăнса мĕн чухлĕ пурнăçран йулнă: „ыйтулă çыру“, „тÿлевлĕ йарав“ мĕн иккенне те пĕлместĕн‛ — тесе хурланса илтĕм хама-хам.

Çанталăкĕ шăрăх, сăмахĕсем ăнланмала мар, Канашри почтă чĕлхине ăнланаймастăп. Мĕн курас ĕнтĕ манăн?

**И. К-ке.**

## ШŸРПЕ ÇИМЕ ПЫРĂР

Шăхасанти столовăй пуçлăхĕ Оçипăв, хăй пайаннипе столовăйĕнче какай йашки çимесĕр чылай пурăннă хыççăн, пĕррехинче хăйне хăй çапла калат̆:

— Кун пек май килмест, мĕнле те пулин выљăх тупса пусса какай тăвас пулат̆. Хамăн та хырăм какай йашкишĕн, еккей, ма кун çинчен малтанрах шухăшламанха епĕ? — тенĕ.

Хайхискер, Хурамал пасарне тухса та вĕçтернĕ. Çÿресен-çÿресен çакă пасара пĕр çын ĕне илсе тухнине курах кайнă.

— Акă ăçта вăл какай йашки! — тенĕ те, савăннипе кăшт кăна ташласа йаман Оçипăв.

— Ĕни ытла та самăрскер пулнă пулмала, çавăнпа хĕпĕртенĕ ĕнтĕ вăл, — теме пултаратăр есĕр, вулакан йулташсем. Ĕни хăй вăхăтĕнче самăр пулнă, теççĕ. Сĕт те сахал мар панă пек калаççĕ, анчах... Темле телей килмен çав. Выљăхсен те вĕт инкек сахал мар пулат̆. Темле усал ĕнесем хулиганланса, ĕнен чип-чипер хырăмне виçĕ çĕртен тĕкнĕ те шăтарнă. Ĕне хуçи тем пек сыватасшăн тăрăшнă. Тĕксе шăтарнă вырăнсене карболкăпа та сапса пăхнă, çук, ĕне кунран кун начарланнă.

— Капла пулмаст̆, — тенĕ те аманнă ĕнене Хурамал пасарне сутма çавăтса тухнă.

Шăхасан столовăй пуçлăхĕ Оçипăв йулташ çак ĕне патĕнче тăнă та ĕнтĕ.

— Тупата ку ĕнене илетĕп! — тенĕ вăл.

Вăхăта нумай тăсса тăма йуратаканскер мар вăл Оçипăв йулташ. Кĕçех ал çапнă та, илсе те пăрахнă. Шăхасанта Оçипăв столовăй валљи ĕне илсе пырасса малтанах пĕлсе тăнă. Малтанах тупса хатĕрленĕ тăватă меçник.

Кĕçех столовăй пуçлăхĕ Оçипăв йулташ ĕнене çавăтса, хăйĕн хваттерне çитсе те кĕрет.

Шăхасан райĕçтăвкомĕ март уйăхĕнче йышăннă постановлени тăрăх, выљăх-чĕрлĕхе кашни килте пусма йурамаст̆ пулин те, столовăй пуçлăхĕ Оçипăвпа унăн меçникĕсем уна-куна пăхса тăман.

Тапратнă ÿсĕр меçниксем ĕçме. Аллисене çуса чăрманман вĕсем, „вăхăт — ылттăн“ тенĕ те, ĕне тирне сÿме пуçланă-пуçламан хырăмне тĕртсе те шăтарнă.

Карболкă сапнă вырăнне те касса пăрахман.

— Пур татăкĕсене те кунта хурăр, — тесе кăна тăрат̆ столовăй пуçлăхĕ.

— Пырат̆, карболкăлă пулин те, епĕр çийес çук вĕт йашкине, — теççĕ мухмăр тарне йухтарса меçникĕсем.

Пилĕк çын пĕр бригадă. Бригадăпа ĕçлесен тем тума та пулат̆ вĕт. Ĕне пусасси мĕн вăл? Бригадăпа ĕçлесен 100 çул ÿсĕ йумана та кĕçех касса йараççĕ пулат̆ те. Ĕне какайне тăварласа та хучĕç. Чипер столовăйсенче тухтăр пăхман какайа пĕсермеççĕ, выљăх пуснă чух санитарипе гигийенăна хытă пăхăнаççĕ. А кусем...

— Ÿссĕрсемшĕн тинĕс те чĕркуççи таран, — тесе ахаљ каламан пулĕ çав. Ăна-кăна пăхмарĕç вĕсем.

Какайне тăварласан меçниксем хăвăртрах ĕнен пуç-урисене, ăшчиккисене тата пĕр литăр ерехе 5 пайа уйăрчĕç те... карĕç килеле. Тепĕр кунне Шăхасан столовăйĕнче апатланакансене какай йашки çитерчĕç.

**Гр. Захарăв.**

# Трак районĕнчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“



— Йулташсем! Çуракине пĕтертĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ иртнĕ март уйăхĕнче колхозниксен аслă пухăвĕнче витнĕ йĕтем тума хушнине пурнăçлама тытăнас пулаť...



— Тырă вырса пĕтернĕ çĕре витнĕ йĕтем хатĕр пулмала. Тырă вырма тухни ерне иртнине аса илсе, витнĕ йĕтеме тума тытăнасах пулаť...

## БАНКĂРИ СЦЕНКĂ

Тĕлĕнмели нимĕн те çук кунта. Калăпăр есĕр лайăх ўпке-чĕрепех патшалăх банкин Йетĕрнери уйрăмне пырса кĕретĕр. Есĕр катаран килнĕ çын, сире учителсем йе рабочисем ĕç укçи илме, çитменни çинче иртнĕ уйăхсемшĕн те илме хушса йанă. Çаплаччĕ сирĕн ĕмĕт: укçине илсе кайатăп та кунпа ĕç те пĕтет, урăх ĕçе тытăнатăп. Пĕлетпĕр сире — есĕр уборкă вăхăтĕнче васкасах килсе кайас тенĕ вĕт-ха хулана. Анчах... анчах сирĕн ĕмĕт супăнђ хăмпу пек пăртах саланса кайаť.

— Пайан укçа памастпăр, — илетĕр кĕтмен ответ госбанкăрисенчен.

— Мĕншĕн, хăçан паратăр тата? — ыйту паратăр ирĕксĕрех.

— Укçа çук, ыран килĕр, — илетĕр есĕр каллех кĕске ответ.

Чăтаймастăр есĕр, лăплантармасť сире нимĕн чухлĕ те ку ответ.

— Ыран каллех утмала-и, ĕç çакă анчах мар вĕт? — йăлăнатăр татах есĕр.

Анчах çав-çавах сире тытса лăскакан ответ илетĕр:

— Çук, пайан пулмасť!..

Вара сирĕн таврăнса утасси çеç йулаť. Таврăнса утакансем есĕр кăна мар-ха, вĕсем кашни кунах темиçе деçйаткă, ун çинчен сăмах та çук. Епĕр кунта хамăр асăрханă кун, пĕр сехет хушшинче пулса иртнĕ сценкăна çеç илсе кăтартасшăн. Ĕмĕтленмен çĕртенех курма май килчĕ ăна пирĕн. Тĕрĕсрех çакăн пек пулса пычĕ вăл.

— Килме именекен пултăм ĕнтĕ, тăн çĕтрĕ? — вăрçмалипех вăрçаť хăйне (мĕншĕн тесен, банкăрисене вăрçма йурамасť, унта çавăн пек йăла) Палтай йалсовечĕн çекретарĕ Николай Уткин, тен çийĕнчи кĕпине те çурса тăкĕччĕ, анчах хулиган мар-ха вăл.

— Мĕн вара сирĕн? — ыйту патăмăр епĕр ăна хута кĕнĕ пек пулса.

— Колхозниксем ыйтнипе йалта çăл тутартăмăр, ĕçлекенсене 300 тенкĕ укçа памала. Вĕсем укçине те алла илмеççĕ, хăйсен тўлевĕсем шутне кĕртме хушса йачĕç. Документсемпе кăна йĕркелемеле ку ĕçе. Укçи те хамăр счот çинче пур. Çав ĕçшĕн вĕт пайанхипе 25 хутчен госбанка çитрĕм, кашни килмессĕрен 40 пус каçă укçи тўлерĕм, та-

# колхозра пулнӑ ӗҫсемпе пулас ӗҫсем



— Авӑн ҫапас ӗҫ хӗрӳлӗн пырать. Витнӗ йӗтеме тума тытӑнасах пулать.



— Иулташсем, пире витнӗ йӗтем ҫинчен сӳтсе-йавассине пӗтериченех йур витсе хуплайа лартрӗ. Витнӗ йӗтеме тума тытӑнасах пулать.

та мансӑр пуҫне плотник Черкесӗв икӗ хутчен ҫитрӗ. Ҫапла — 300 тенкӗ укҫашӑн 27 хутчен Йетӗрнене ҫитрӗмӗр. Мӑшкӑл вӗт ку! — вашталанса пӗлтерчӗ пире Уткин.

Халӑх черечӗ ҫав-ҫавах пӗр чӳрече умӗнче кӗпӗрленет.

— Ну мӗнле, укҫа паратӑр-и мана пайан? — пырса ыйтрӗ районри сывлӑх пайӗн пуҫлӑхӗ Перлович

— Ҫук, ыран килсе пӑх, — терӗҫ ӑна.

Кӑна та укҫа хӑвӑрт кирлӗ пулнӑ. Районра еппидеми хытӑ сарӑлнӑ — ачасем вилеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе районра ӗҫлекен медицинӑ работникӗсен бригадине укҫа тӳлемеле мӗн унӑн.

— Пионер лагӗрне ваҫҫи продуктӑсем илме укҫа кирлӗ, пӗтӗмпе те 300 тенкӗ ҫеҫ, майлаштарса парӑр ӗнтӗ, — йӑлӑнаҫҫӗ райкомолӑн пионер работникӗсем.

— Ҫук, ҫук, пулмасть тенӗ вӗт сире...

— Пирӗн май уйӑхӗшӗн ӗҫукҫи парса татман, — чекне кӑмтарать тепӗр ҫын.

— Пулмасть, пулмасть...

— Миҫе хутчен килтӗм, ҫапах ӗҫ тухмасть, ӗҫсӗр ҫын мар епӗр! — вӑрҫса халӑхсене сирсе тухрӗ Мучар йалсовечӗн председателӗ Ҫемйонӑв — Ийуҫ уйӑхӗшӗн ӗҫукҫи паман учитӗлсемпе йалсовет работникӗсене, мӗн латти ку! — тарӑхать вӑл.

— Пирӗн наборшчицӑ сывмар пулчӗ, отпуска йатӑмӑр, пӗтӗмпе те 83 тенкӗ ҫеҫ илмеле, парӑрах ӗнтӗ? — ыйтаҫҫӗ типографинчен пынисем.

— Ҫук, пулмасть пайан...

— Отпуска тухни ерне иртрӗ ӗнтӗ, укҫине ҫапах илейместӗп, — тесе банк коридорӗнче калӗмалӗ уткаласа канать районри „Сойузпичет“ пуҫлӑхӗ Силивестрӑв.

Ҫакӑн пек сценкӑ пулса иртет, кашни кунах ир пуҫласа каҫчен пырать вӑл патшалӑх банкин Йетӗрнери уйрӑмӗнче. Вӑл сценкӑн аслӑ режиҫорӗ — банк управҫайушчийӗ вырӑнне йулнӑ Бурашникӑв С. М. пулса тӑрать.

Чӑнах та, укҫа-тенкӗ парса илес ӗҫе ҫирӗппӗн йӗркелесе пынине вуҫҫех хирӗҫ мар епӗр. Анчах ҫав ҫирӗплӗх йӳтӗмӗпе пулса пыракан бӳрократисӑма, май пур ҫинчех килекенсене укҫа памасӑр темиҫе хутчен ҫӳретсе ӗҫ вӑхӑтне уссӑр расхутланине тата ӗҫукҫине темиҫе уйӑхшар памасӑр чӑсса пынине тӗпренех хирӗҫлетпӗр епӗр.

— Кирлӗ мар пире кун пек сценӑ ҫинчи сценкӑ. Йетӗрнери прокурор пӑхса савӑнтӑр ӑна!..

**Ник. Пушкин.**

# ТИРПЕЙСĔР

Хăш-пĕр чухне арăмăмпа ачасем лавкана кайсан час таварăнмаççĕ. Ир кайсан кăнтăрла таварăнаççĕ, кăнтăрла кайсан—каç таварăнаççĕ. Епĕ уншăн арăмпа ачасене вăрçатăп. Вĕсем ку айăпа:

— Прикашчикĕ ӳсĕр пулнă пирки лавкана час уçмарĕ,—тесе Николайĕв çине ӳпĕнтереççĕ...

Пĕр хамăн йуратнă хĕрĕме шупăр туса парас тесе арăма кооператива катам пир илме йатăм. Манăн арăм лавкаран час таварнаймарĕ, ирхи апатра кайнăскер, кăнтăр иртсен 2 сехетрен тин таврăнчĕ. Темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм.

— Мĕншĕн лавкаран час таварăнмарăн? Ăçта çава тĕпĕнче çапкаланса çӳрерĕн! —тесе хăтăрса тăкрăм. Арăм манăн çавартан тухнă ирсĕр сăмахсене чăтаймасăр йĕрсе йачĕ.

— Епĕ нимĕн те айăплă мар, йаланах есĕ мана çапла вăрçатăн, ниçта та çапкаланса çӳремен. Прикашчик мухмăрпа аптранипе лавкана час уçман пирки, нумай кĕтсе тăмала пулчĕ,—тесе каллех Николайĕв çинчен калама тытăнчĕ. Арăма вырăрăнсăр хăтăрса тăкнă пек туйăнчĕ те, пуçа çĕрелле усрăм...

Арăм илсе килнĕ катам пире алăнах тытса пăхас килчĕ ман. Катам пире хам алла илтĕм те:

— Ап-пу-уй, ваçка, ваçка, çара çамка-а! — тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Нийепле те шур катампир теме май çук, таса мар тикĕтлĕ алăсемпе тыткаласа пĕтĕмпех вараласа пĕтернĕ.

— Тă-ф-фу! Шур катампир пулчĕ-и вара вăл? Кам шурă тейĕ ун пек вараланчăк йапалана? Суккăр çын та „шурă“ тейес çук; шурă мар, ула катампир теме пулаť, — сурчăк тухмаст пулин те, çĕре лачлаттарса суртăм.

— Кам кун пек вараласа пĕтернĕ? — ыйтрăм арăмран.

— Виçсе панă чухне прикашчик вараланă пуђ, вăл мана виççе париччен пĕр çынна 3 литр таварни тикĕт тултарса пачĕ, — ответлерĕ арăм.

— Неуштă Николайĕвах çавăн пек тирпейсĕр тыткалаť йапаласене? — каллех шухăшлатăп хам ăшăмра.

Манăн тата пĕр ирхине сахăр пĕтсе çитрĕ. Сахăр кирлĕ. Пĕрре чей ĕçме вĕреннĕскер нийепле те чей ĕçмесĕр пурăнаймастăп. Ачана сахăр илме каллех Николайĕв патне лавкана йатăм. Ача ман кăнтăрла кайнăскер хĕвел аннă вăхăтра тин киле çитрĕ.

— Ма час килмерĕн, ăçта çава тĕпĕнче выђаса çӳрерĕн! — ачана хăтăрса тăкрăм.

— Ниçта та выђаса çӳремен, прикашчик час пымарĕ те, ăна кĕтсе тăтăм.

— Неуштă Николайĕв ытла та пăсăлса кайнă. Вĕресе çитнĕ сăмавара сĕтел çине лартрăм та, сĕтел тавра чей ĕçме лартăмăр.

— Ф-фу-у, сăмсана! — Сахăра тута çывăхне те йама çук, краççин шăрши сăмсана çĕçĕпе каснă пекех çураť.

— Мĕнле чей ĕçес ку сахăрпа?

— Ăçта краççинпа вараласа килтĕн сахăра? — йатлама тытăнтăм ачана.

— Еп мар, атте, прикашчикĕн алли краççинлă пулнă пуђ. Мана сахăр турттарса париччен вăл пĕр çынна краççин тултарса пачĕ те, кайран аллине çумарĕ пулмала, — тархасласа калама тытăнчĕ манăн ача...

— Ну, йурĕ, — тетĕп ачана, хам кăшт йăвашланнă пек пулса, — чей ĕçме мар, лампă вырăнне çутса çунтарма йураť пуђ.

— Ан ухмахланса калаç, — тет арăм.

Епĕ кăсйерен шăрпăк кăлартăм та, йĕпенсе тăракан краççинлă сахăра чĕртсе йатăм. Тĕлĕнмеле, манăн сахăр 10 линейлă лампă пекех йалкăшса çунаť. Чей ĕçесси пулаймарĕ пирĕн. Сĕтел хушшинчен тухрăмăр та, пĕрер курка сив шыв çатлаттартăмăр... Çакăнтан кайран Николайĕв йулташа, кооператив членĕсен аслă пухувĕ ыйтнипе, прикашчикран кăларса пăрахачченех, лавкана ачана та, арăма та тавар илме йамарăм. Тирпейли киличчен тăхтарăм.

**Марк. Дангер.**

# Павăлпа Иван

(Урамри сценă).

Павăл: На! На!... Аťа карăмăр. (*Тилкепинчен турткалаť, пушипе хăмсараť*).

Иван: Тррр... Тăхта-ха!

Павăл: Но! Аťа, кайа йулатпăр вĕт! Бригадир килсе ан тухтăр тата.

Иван: Тррр... Тăхта-ха!

Павăл: Мĕн пулчĕ тата?

Иван: Хăла лаша вађђи тилкепе манса йулнă.

Павăл: Тфу... ĕне пăруш, ăçта кайассине пĕлен пуђ вĕт! Аťа кайар. На, на!..

Иван: Тррр... Пĕлеп-ха, хыт суха тума кайатпăр. Тăхта-ха теп вĕт ĕнтĕ! (*Тилкеперен тытаť. Лашана чарма пикенет*).

Павăл: На!.. Аťа карăмăр!

Иван: (*Ларса*). Унта тилкепесĕр мĕн тăвăпăр?

Павăл: Капла тăвăпăр; лаша пуçĕнчен çавăтса çӳрĕпĕр, аťа, карăмăр, но!

Иван: (*Хыçне çаврăнса пăхса*) — Трррр... Тăхта-ха!

Павăл: Мĕн пулчĕ тата? Кайа йулатпăр вĕт! Аťа, хăвăртрах!

Иван: Трррр... Вон ав, плук ĕçерĕнсе йулнă! (*Урапа çинчен анаť*).

Павăл: Ех, анкă-минкĕ, анкă-минкĕ, пуçу татăлса йулмарĕ-и тата?

Иван: Пуç хам çумрах никак та, анчах плугсăр мĕн тăвăпăр?

Павăл: Тăват лашана пĕр плуг кӳлсе сухалăпăр.

Иван: А, еп мĕн тăвăп? (*Урапа çине лараť*).

Павăл: Еп каннă чух ес сухалăн.

Иван: Еп сухаланă чух, ес мĕн тăвăн?

Павăл: Канăпăр, на аťа, кайăпăр.

Иван: Трррр... Тăхта-ха.

Павăл: На!... Аҫа хăвăртрах, кăнтăрла ҫитрĕ вĕт ĕнтĕ. Сан пирки манăн нормă тулмасăр йулаҫ, но, аҫа карăмăр!

Иван: Тррр, теп, тăхта ĕнтĕ... (*анаҫ*).

Павăл: На... мĕн пулчĕ тата шешлĕ аври?

Иван: Ҫăкăр манса йулнă.

Павăл: Ҫăкăр? Манăн та ҫавăнтаччĕ-и?

Иван: Ҫавăнтаччĕ ҫав.

Павăл: Тррр.. апла пулсан йăпăрт кăна чупса кайса илсе кил.

Иван: Чуп, есĕ илсе кил, ман алă ыратаҫ.

Павăл: Ҫук, ес кай, срочнă, кай, та кил.

Иван: Еп каймастăп.

Павăл: Апла пулсан еп кайап, тилкепе ăҫта тетĕн-ха?

Иван: Тилкепе вите умĕнче, плуг хапха патĕнче, ҫăкăр шкапра.

Павăл: Йураҫ, апла пулсан, еп карăм.

Иван: Тупайăн-ши ара ес?

Павăл: Как тупмас тет, тилкепе шкапра, ҫăкăр хапха патĕнче, плуг вите умĕнче.

Иван: Вот анкă-минкĕ тенĕччĕ ху мана, ес ху та анкă-минкĕ иккен.

Павăл: Еп хăҫ васканипе манатăп, а ес... Пăх-ха хĕвел ҫине, ача, пăх халĕ хĕвел ҫине?..

Иван: Мĕн пулнă?

Павăл: Кăнтăрла ҫитнĕ вĕт, на!..

Иван: Кăнтăрла ҫитнĕ, апла пулсан аҫа, иксĕмĕр те кăнтăрлахи апата таврăнар. Но... аҫа, хăвăртрах. Но!..

**Мих. Сирен**

# ТЕТТЕ

*(Йуптару)*

Ултă ҫулхи Петук,
Ашшĕпеле пĕрле
Пусу хĕррипеле
Иртсе пынă чух,
Тулă ани ҫинче утмăлтурат
Ларнине кураҫ.
— „Атте, — тет, — атте,
Кунтала пăхха:
Акă лараҫ тетте —
Ытарма ҫук паха.
Чечекĕсем лараҫҫĕ ун умра
Ытла илемлĕ...
Еп вĕсене пуҫ кăшăлĕ тума
Татса илем - и?..
Итле - ха, атте:
Ҫĕркаҫ епĕ тĕлĕк тĕллентĕм...
Ну, вара тĕлĕнтĕм:
Кайатăп пек еп куккасем патне...
Ҫанталăк шăрăх пек.
Утма ҫул тăрăх еп
Кукк ąсен йалне,Тури-касса
Утса пыратăп пек пит васкаса.
Пăхатăп та тавранала,
Тĕлĕнсех каймала:
Ҫак уйра талкишпех, веҫех,
Кăн-кăвак чечек...
Ах, ҫав тери савăнтăм еп вара
Чечексене курсассăн таврара..."
— „Ха-ха... Ах, тур чухлашшĕ!..
Айван ача-пăча",—
Кулаҫ Петукран ашшĕ, —
„Ас кĕмен сан пуҫа:
Ара, утмăлтурат,
Мĕн тума вăл йураҫ?
Унăн кăвак чечекĕсем кăна
Астараҫҫĕ сана,
Хăй вăл лараҫ тулла
Ӳсме чарса.
Ҫавăнпа ҫумлас пулаҫ
Ăна часрах".

* *
*

Тĕрлĕ искусствăн, литературăн
Произведенийĕсенче те,
Вулаканăм, час-часах ес курăн
Тулă анийĕ ҫинчи пек,
Сийен кӳрен ҫумкурăк тетти йевĕр,
Суйа илемлĕхлĕ „шедевăр".
Ес ҫав „теттен" сийенлĕхне чухла:
Курсан ăна ан хапсăн Петукла.

**Ф. Ванин.**



„Капкăнăн" ҫитес номĕрĕнче „Ачасен страници" тухаҫ. Унта кашкăрсем ҫинчен ҫырнă материалсем те пулĕҫ.

*А. Глебăв.*

# УЛТАЛАННĂ

(*Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номĕрте*)

Лjошкă. Матĕрне.

Райски. Матĕрне? Ес ма кунта килсе кĕтĕн-ха? Клуб вырăнне-и? (*Лjошкă пуçне сулать. Райски çăмăлкайла çаврăнкаласа ăна ыталаса илет*). Хăрамастăн-и? Кашкăр тытса кайсан?.

Лjошкă. Еп кашкăрăнне шăлне çапса ватап.

Райски. Кашкăрăнне-и? Ненай, ватайăн тем. Вăл сан пеккисене мар курнă. Канхвет çийетĕн-и?

Лjошкă. Çийеп. (*Канхвет илсе çăварне хыпрĕ. Райски ăна ыталаса илчĕ. Лjошкă Райскине çапса алăк патнеле ыткăнтарса йачĕ. Райски шăп çав самантра килсе кĕнĕ Михал Рогожин аллине лекрĕ. Михал Рогожин Упокойникăв пуљ тесе хĕнеме тытăнчĕ*).

Райски. Айуй! Ку кам?

Мих. Рогожин. Ку-и? Епĕ ку. Аксана, сволăч Ленăшăн! Ак ак! Çапах хăй хвершăл...

Райски. Михал! Ухмаха йернĕ-им ес? Епĕ ку, Райски!

Мих. Рогожин. Ес-и?

Райски. Мĕн ес нимĕн пăхмасăр хĕнетĕн, путсĕр! Ай! Айăк пĕрчине хуçрĕç пулмала... Шăнпуçсем!.. (*Авкаланса тухса кайрĕ. Мих. Рогожин ним тума пĕлмесĕр тутăрпа пĕркенсе тăракан Лошкă çине пăхса тăрать*).

Мих. Рогожин. Вĕт мĕнле шĕвĕртрĕр иккен есĕр мана! Йури хвершăл çине елекленĕ. Мана айакала пăрас тесе... Йурĕ, Ленă, асăнтарăп-ха еп сана!.. (*Майĕпе утса пырса Лjошкă çине сиксе ўкрĕ. Лешĕ унăн аллисенчен çавăрса илчĕ. Çав вăхăтрах Рогожинă килсе кĕрсе вĕсем патне чупса пычĕ.*)

Рогожинă. Михал! Ес мĕн хăтланан кунта? Михал, тетĕп! (*Михал арăмĕ çине тĕлĕнсе пăхса Лjошкă патĕнчен пăрăнчĕ. Рогожинă лампă çуттине пысăклатрĕ*).

Мих. Рогожин. Ленă? Есĕ-и?.

Рогожинă. Епĕ те-ха... ес мĕн хăтланан кунта? Пĕтĕмпех намăссăра тухнă иккен ес. Советра хĕрпе... манран вăтанмастăн пулсан, çынсенчен вăтан хăть.

Мих. Рогожин. Епĕ... Ленă!

Рогожинă. Кун хыççăн нимĕнле Ленă та мар еп сана! Пирĕн хушăра нимĕскер пулман та, пулас та çук. Çапла йуратса пурăнни-ха ес мана? Ирсĕр çапкаланчăк...

Мих. Рогожин. Ленă!

Рогожинă. Намăссăр, кĕççе пит! Кай хăвăн майру патне. (*Куççулне шăлса илет*).

Лjошкă. Ачасем. Тилпĕрен çирĕр-и мĕн есĕр? Еп камне пăхăр есĕр!..

Рогожинă. Лjошкă!

Мих. Рогожин. Вăт ула шуйттан!

Рогожинă. Ес ма хĕрачала тумланса çўрен?

Лjошкă. Ма, ма? Çур сехет ытла ĕнтĕ сана шыраса çўретĕп... Праски спектакăљте выљасшăн мар. Амăшĕ йамасть, тет. Вечĕр пăсăлать.

Рогожинă. Ай, çырлахах! Мĕнле-ха апла?

Лjошкă. Çаплах. Хама хĕрачала тумланма тиврĕ.

Мих. Рогожин. Вăт шуйттан! А, еп ухмах... Ленă! Ес мана йуратан вĕт?

Рогожинă. Ак хуйхă тупăнчĕ! Çирĕн-и хăть ес пайан?

Мих. Рогожин. Çикелерĕм... Темтепĕрсем вĕретнĕччĕ...

Рогожинă. ,Мĕн вĕретрĕн? Суйан пулмала.

Мих. Рогожин. МТС столовăйĕнчи пекех мар та ĕнтĕ... Икĕ улма пĕçерсе çирĕм. Повăр мар вĕт еп.

Рогожинă. Вăт хуйхă! (*Сĕтел йешчĕкĕнчен çăкăр таткисем кăларчĕ*). Ме!

Мих. Рогожин. Çийес килмест.

Рогожинă. Çи хăйамат! Сан пек индуссене колхоз фондĕнчен çитермесен те йурать те... Шел вĕт.

Мих. Рогожин. Ленă... Епĕ зайавлени кăтартма килсеттĕм те...

Лjошкă. Чăнах-и? Кайала колхоза кĕрес тесе-и?

Мих. Рогожин. Райски арпаштарчĕ мана кунта... Мĕнле шутлан? Йышăнĕç-ши?

Рогожин Пĕлместĕп.

Мих. Рогожин. Ман майлă пулса пĕр-ик сăмах хуш-ха ес унта...

Рогожинă. Хуйхă мар-и-ха ĕнтĕ ку? Хăй темле мыскарасем туса пĕтернĕ те, сăмахне каллех манăн калас пулать. Мĕн калама пултарап-ха епĕ сан çинчен?

Мих. Рогожин. Йуратан пулсан...

Рогожинă. Йуратни пĕтерет те. Атту пулсан... Ну ать-ха, еппин, пĕре чуп туса илер... (*Михалана чуп тума тытăнать. Лешĕ айакала пăрăнать*).

Мих. Рогожин. Тăхта! А çыру?

Рогожинă. Мĕнле çыру?

Мих. Рогожин. Акă! Кунтах выртать. (*Хут татăкине урайĕнчен çĕклет* ). Кăна мĕнле ăнланмала? (*Рогожинăпа Лjошкă тĕлĕнсе вулаççĕ*).

Рогожинă. Аййуй! Кун çине кам хушса çырнă? Чим-ха... Епĕ ăна Леонарда парса хăварсатăм

Лjошкă. Урăх кам çыртăр?

Мих. Рогожин. Леонард-и? Чăнах та... Мĕнле шухăшласа илмен-ха еп ăна?

Лjошкă. Ну маçтăр та тунă!

Мих. Рогожин. Çавă! Ленă! Вăл сана вырăнтан кăларасшăн. Иртнĕ ернере сана темскерле хут çине алă пустартăм, тет. Хăй каларĕ...

Рогожинă. Пĕтĕмпех пĕлеп.

Мих Рогожин. Пĕлетĕн-и?

Рогожинă. Епĕ тăмсайах мар. Йурийех алă пусса патăм, хам çав каçах хулана урăх хут çырса йатăм. Хвершăл илсе кайрĕ. Çапла, çапла, терĕм, йалсенче Райски пек „кадăрсем" чăрмантарнипе ĕçлеме йăвăр, терĕм. Хаљ РЕК-рен инструктăр килессе кĕтеп.

Мих. Рогожин. Вăт шуйттан! Шел паçăр епĕ ăна сахалтарах ĕнселерĕм.

Лjошкă. Ех... епĕ те.

Мих. Рогожин. Йурӗ ӗнтӗ. Ҫайран вӗрентӗпӗр-ха епӗр ăна.

Рогожинă. Есӗр халӗ ăна нимӗн те ан систерӗр. Тарма пултарать. Алла лекиччен шарлама йурамасть. Пӗр ҫынна кăна тивекен йапала мар вăл. Ăнлантăр-и?

*Буценкă килсе кӗчӗ. Ун умӗнче Райски йăпăлтатса ҫӳрет.*

Райски. Ак Рогожинă йулташ.

Буценкă. Аван-и? Епӗ РӖК инструктăрӗ, Буценкă.

Рогожинă. Аван-ха, Буценкă йулташ! Есӗр питӗ вăхăтра килтӗр. Кӗҫӗр кунта вечӗр пулать...

Буценкă. Программи мӗнле?

Рогожинă. Культура пирки. Халех еп сире проограммă тупса парап... (*Хăйӗн сӗтелӗ ҫинче шырать*) Ăҫта-ха вăл? План та, ыттисем те кунтахчӗ. Ăҫта кайса чикрӗм-ха епӗ ăна? Догăвăр та ҫук. Сăмах каламалине ҫырса хунăччӗ... Ăҫта кайса кӗнӗ-ши вӗсем? (*Сӗтел айӗсене, йешчӗксенче шырать*).

Буценкă. Ыгти кирлӗ хутсене те ҫапла усратăр-и есӗр?

Райски. Ҫухалассисем пулкалаҫҫӗ. Тăтăшах...

Рогожинă (*хӗрелсе кайса*). Райски! Кунтах хăварнăччӗ-ҫке вӗсене!..

Райски. Суйатăр, Йеленă Денисăвнă. Сирӗн тăн-пуҫăр пăртак уксахлать пулмала. Паҫăр пӗтӗмпех хăвăрпа пӗрле илсе кайрăр.

Мих. Рогожин. Ма суйан?

Райски. Мӗнле „суйатăп“

Мих. Рогожин. Вăл хутсемпе пирус чӗркерӗмӗр-ҫке.

Рогожинă. Кам?

Мих. Рогожин. Епӗ...

Рогожинă. Есӗ-и?

Райски. Самăй ҫавă! Ҫапла... Тӗрӗс! Туртрӗ, астăватăп. Сӗтел ҫинчен темле хут илчӗ те...

Мих. Рогожин. Кам илчӗ? Ес ху илтӗн!

Райски (*Мих. Рогожин ҫине кăтартса*). Ку унăн упăшки, Буценкă йулташ. Ăнланатăр пуль?

Рогожинă. Питӗ лайăх ăнланатăп. Паҫăр сводкăсемпе пулнă пек-и? Ҫапла-и?

Райски. Елек ку. Йышăнмастăп, Буценкă йулташ...

Буценкă (*Райскине*). Ес хуллентерех шавла (*Райски Буценкă ҫине хăравҫăллăн пăхса илчӗ*).

Рогожинă. Буценкă йулташ, есӗр килнишӗн ҫав тӗрлӗ хаваслантăм епӗ.

Буценкă. Иртерех хаваслантăр.

Рогожинă. Мӗнле „иртерех“?

Буценкă. Сана районта выгăвăр пачӗҫ.

Рогожинă. Мана-и? Мӗншӗн?

Буценкă. Пӗлместӗр те-и?

Рогожинă. Есӗр ман ҫырăва илтӗр-и?

Буценкă. Мӗнле ҫыру?

Рогожинă. Упокойникăвран парса йанине.

Буценкă. Упокойникăвран?

Рогожинă. Упокойникăвран ҫав... Пирӗн хвершăл вăл... Пӗлетӗр-и?

Буценкă. Пӗлмесӗр, ман ӗлӗкхи упăшках вăл.

Райски. Сирӗн упăшкăр-и?

Буценкă. Епӗ унпа виҫӗмкун курса калаҫрăм.

Рогожинă. Ҫапла. Ҫыру та...

Буценкă. Нимӗнле ҫыру та памарӗ вăл мана.

Рогожинă. Чăнах-и? Ай, ачасем!.. Лёшкă, чуп часрах Упокойникăв патне! Кунта илсе кил. Апла есӗр епӗ аллă пусса йанă хута ҫех илнӗ пулать? Ай, ҫырлахах!..

Лёшкă. Ленă Рогожинăна выгăвăр панă-и? Кульпоходра Хӗрлӗ йалав кам илчӗ? Рогожинă мар-и? Тырпул тухăҫлăхне кам ӳстерме пулăшрӗ? Ленă мар-и? Патшалăха тырпул кам малтан леҫтерсе пӗтерчӗ? Шăнкасси мар-и? Есӗр вăл кунта мӗн тунине шутласа тухăр. Килӗрен пăхса ҫӳрӗр. Хӗрарăмсемпе калаҫăр. Йеленă Денисăвнăшан епӗр... тивӗҫлине пуҫне те пăрса татма пултаратпăр, ак мӗн. Халех епӗ кунта Упокойникăва сӗтӗрсе килетӗп. (*Тарăхнипе пуҫҫинчи хӗр парикне хывса илчӗ. Буценкăпа Райски тӗлӗнсе пăхса тăраҫҫӗ. Лёшкă парикне сулкаласа тухса чупрӗ*).

Буценкă. Епӗ пӗлместӗп те... Пире сирӗн ҫинчен пӗртак пӗлтеркелерӗҫ... Сире йалсоветӗнче ӗҫет, теҫҫӗ.

Мих. Рогожин. Кам калать?

Рогожинă. Мана-и?

Мих. Рогожин. Ленă-и? Сăхсăхса илӗр, инструктăр йулташ!

Буценкă. Сăхсăхма маннă ӗнтӗ епӗ... Ерехне тӗрӗслесе пăхма пултаратпăр.

Мих. Рогожин. Кам ҫырса пӗлтерчӗ? Райски-и?

Буценкă. Райскин ӗҫ те ҫук унта. Ун пирки уйрăмăн калаҫмала.

Мих. Рогожин. Райски пулмасан, унăн ушкăнӗсенчисем...

Буценкă. Ак халӗ сирӗн сӗтелте ерех тавра шӗ ҫук-и?

Райски (*кулкаласа*). Пулкалать. Мӗн ҫылăха пытармали пур?

Рогожинă. Манăн-и? Ерех-и? Намăса пӗлместӗни есӗ, Райски.

Райски. Ан тувăр, Йеленă Денисăвнă. Ăна пурте пӗлеҫҫӗ. Тӗрӗслесе пăхсан хăвăрах ырă мар пулӗ.

Рогожинă. Тархасшăн! Акă! Курăр! (*Сӗтел йешчӗкӗсене турта-турта кăларать*): Ну? Ăҫта кунта ерех?

Буценкă (*йешчӗксене пăхса тухрӗ, анчах нимӗн те тупмарӗ. Райски пичӗ кăвакарса кайрӗ*).

Мих. Рогожин. Шыратăр тăк, есӗр Райски сӗтелӗнче шырăр.

(*Райски сӗтелӗн йешчӗкӗсене уҫаҫҫӗ. Буценкă ерех кӗленчи туртса кăларчӗ. Райски тӗмӗн калама хăтланса ҫăварне уҫкалать*).

Райски. Вăл... ерех мар.

Буценкă. Мӗскер?

Райски. Вăл... шыв. Шыв кăна.

Мих. Рогожин. Тура шывӗ-и?

Райски. Ҫук, ахалийех. Урайне сапкалама, чернил кӗленчи ҫине йама. Акă курăр-ха. (*Ерех кӗленчине Буценкă аллинчен туртса илсе чернил кӗленчи ҫине йарать, йулашкине урайне сапкалама тытăнать*).

Буценкă. Сан шывун шăрши темскерле..

Райски. Кӗленчи, чанах та, ерех тыткаланăскер... Шăрши нумайа пырать. Ҫакнашкал сапкаласанах усал шăрша тухать вара. (*Рогожинă ерех кӗленчине туртса илме тăрать, Райски памасть.*)

Буценкă. Кӳр-ха кунта (*Ерех кӗленчине Райскинчен туртса илчӗ. Упокойникăвпа Лёшкă килсе кӗчӗҫ. Упокойникăв Буценкă ҫине тӗлӗнсе пăхса тăрать*).

Упокойникӑв. Ленӑ!

Буценкӑ (*йут ҫынпа калаҫнӑ пек*). Упокойникӑв йулташ, сире йалсовет председателӗ ҫыру парса йанӑччӗ-и?

Упокойникӑв. Ах, хӑйамат!..

Буценкӑ. Мӗн есӗр?

Упокойникӑв. Маннӑ! Пӗтӗмпех маннӑ!

Буценкӑ (*хуллен*). Елӗкхи пекех... Пӑру...

Упокойникӑв. Мӗн? (*Рогожинӑна*). Ӑнлантӑри? Пуринчен ытла—Ленӑчкӑпа калаҫса куртӑм...

Буценкӑ. Упокойникӑв йулташ...

Упокойникӑв. Каҫарӑр... Буценкӑ йулташпа тесшӗнчӗ епӗ. Ҫапла. Шӑп ҫех пӗр сехет калаҫрӑмӑр. Пуринчен ытла — хамӑр хушӑри ӗҫсем ҫинчен. Хӑвӑрах пӗлетӗр...

Лҙошкӑ. Пӗлетпӗр. Вӑл сирен ӗлӗкхи арӑмӑр.

Мих. Рогожин. Вӑт кам иккен вӑл Ленӑ. Тфу, ухмах! (*Хӑйне ҫамкинчен ҫапат*).

Упокойникӑв. Ленӑ, ҫапла... Иккӗшӗ те Ленӑ йатлӑ. Калаҫрӑмӑр... Ҫырӑвӗ халӗ те кунтах выртат.

Рогожинӑ. Ӑҫта?

Упокойникӑв. Акӑ (*шалти кӑсйинчен ҫыру туртса кӑларчӗ*). Вӑт чорт, а? Пӑрӑвах иккен епӗ.

Буценкӑ. Ес пӑру иккенне тахҫанах пӗлетӗп епӗ.

Упокойникӑв. Мӗн! (*Сасартӑк ҫиленчӗ*). Буценкӑ йулташ, тархасшӑн манпа официаљнӑ калаҫӑр.

Буценкӑ (*ҫыруне вулат*). Пӗлетӗр-и мӗн туса хутӑр есӗр?

Упокойникӑв. Мӗн турӑм?

Буценкӑ. РӖК уншӑн Рогожинӑна выгӑвӑр пачӗ.

Лҙошкӑ. Ҫак шӑркана ӗненнӗ-и?! (*Райски чӗтресе кӑвакарса карӗ*).

Буценкӑ. Вӑл шӑрка иккенне пӗлетӗр-и есӗр?

Лҙошкӑ. Ӑна пурте пӗлеҫҫӗ.

Буценкӑ. Пурте пӗлеҫҫӗ? Мӗншӗн халиччен никам та шарламан?

Рогожинӑ. Ҫыркаласа йанӑ.

Буценкӑ. Вӑл шӑрка иккенне ҫырса пӗлтернӗ-и?

Лҙошкӑ. Шӑрка, тесех ҫырман та... Ҫапларах тухнӑ ӗнтӗ.

Буценкӑ. Ҫук! Есӗр мана ӑнланмастӑр пулмала. Шӑрка вӑл — унӑн чӑн-чӑн хушамачӗ. Епӗр справкӑ илтӗмӗр. Йехвин Саввич Шӑрка хушаматлӑ. Укҫа салатнӑшӑн тата документсем пӑсса тунӑшӑн сута лекнӗ. Виҫӗ ҫул кайарах хушамачӗпе йатне улӑштарнӑ.

Упокойникӑв (*тӗлӗннипе аллисене саркаларӗ*). Леонардӑ!

Райски. Лайӑх йат туйанма йурамаст-и вара?

Буценкӑ. Сирӗнпе епӗр уйрӑмӑн калаҫӑпӑрха. Район тан хушнӑ тӑрӑх хаљ епӗ сире арӗслесе хулана ӑсататӑп. (*Райски тухса тарма хӑтланса алӑк йенелле сулӑнчӗ, анчах Лҙошкӑ пӳлсе тытма ӗлкӗрчӗ*).

Буценкӑ. А сирӗнпе мӗн тӑвас? Акӑ мӗн... Епӗ РӖК-пе калаҫса пӑхӑп. Тӗрӗслесе тухиччен выгӑвӑрне памӑпӑр.

Рогожинӑ. Тавтапуҫ! Буценкӑ йулташ, есӗр пирӗн веччӗрта тухса калаҫатӑр-и?

Буценкӑ. Веччӗр мӗн ҫинчен пулат? Йӗркеллӗн нимӗн те каламарӑр-ха есӗр мана.

Рогожинӑ. Куљтурӑ пирки. Епӗ куљтпоход ҫинчен пуплетӗп.

Райски. Ка-ла-ҫа-тӑп! — теҫҫӗ. Ҫӑва патнеччӗ сире пурне те!..

Рогожинӑ. Киларӑмӗсен ӑмӑрту догӑвӑрне ҫирӗплететпӗр. А догӑвӑрӗ ӑҫта? У, вредитӗл! Тепӗр хут ҫырма тивет ӗнтӗ... План та ҫухалнӑ. Мӗнле пуплес... калаҫас-ха манӑн? Пӗр-пӗр ҫӗрте мансан, астутарӑр есӗр, ачасем!

Лҙошкӑ. Астутарӑпӑр. Сире калатӑп, Буценкӑ йулташ, Рогожинӑ кунта пурне те пӑтратрӗ...

Буценкӑ. Пӑтратрӗ?

Лҙошкӑ. Вара. Пурне те хускатрӗ. Ҫуртсем тул йенчен, унчченхи пекех, тӑм та улӑм. Шала кӗрсен тӗлӗнсех каймала — тап-таса та ҫап-ҫутӑ!

Буценкӑ. Апла пулсан питӗ аван! (*Рогожинӑ аллине чӑмӑртат*).

Лҙошкӑ. Вечӗра атӑр! Клуба паҫӑрах халӑх тулса ларнӑ.

Упокойникӑв. Вечӗрта мана сӑмах калатармастӑр-им?

Рогожинӑ. Мӗншӗн?

Упокойникӑв. Пӗр сӑмахпа та асӑнмарӑр та...

Рогожинӑ. Чӑнах-и? Йури мар, Флегант Иванчӑ! Тӗркӗшсе тӑнипе пуҫ ҫаврӑнса кайрӗ... Сӑмах кӑна мар, сана ваљљи ҫӳрприз та хатӗрлерӗм.

Упокойникӑв. Ҫӳрпризӗ ҫӳрприз таха, манӑн сӑмах калассипе чӑнах та сӗкӗнсе ҫӳрес мар тӑр.

Рогожинӑ. Ара мӗншӗн?

Упокойникӑв. Ну, мӗн ҫинчен калаҫас? Ан туртӑр, ан ӗҫӗр тес-и? Йе каллех фортӑчкӑсем ҫинчен? А медпунктра бинтсем те халат та супӑњ те ҫук. Ҫавсем ҫинчен калаҫас-и мӗн?

Рогожинӑ. Вӑт мӗнле ҫын вӑл! Ҫӳрпризне халех каласа пама тивет пуљ. (*Хӗвӗнчен хут татки туртса кӑларчӗ*). Акӑ! Куратӑр-и? Тӑватӑ аптечкӑ, ваткӑсем, бинтсем, супӑњ, халатсем илмели хут... Пурне те тупрӑм! Райски чыкаркӑ туса туртса йарасран йурийех пытарса хунӑччӗ.

Райски. Ну хӗрарӑм та!..

Упокойникӑв. Тупрӑр-и? Йеленӑ Денисӑвнӑ! Ку вӗт... Сире куншӑн — хӑма... хӗрлӗ хӑма ҫинӗ! Тӗлӗнсе хытсах карӑм! Чӑнахах та епӗ... кирлӗ маррине палкарӑм. Каҫарӑр, йӗрӗх арпаштарчӗ. Ак ҫакӑ! (*Райски ҫине кӑтартат. Лешӗ айакала пӑрӑнат*). Тухса калаҫапах! Тухап та, унччен калас тенине мар... малашне хам чӑн-чӑн ӗҫлеме сӑмах паратӑп. Вӑт! (*Рогожинӑ аллине чӑмӑртат*).

Мих. Рогожин. Мана туса калаҫма йурат-и?

Рогожинӑ. Тух а калаҫ, Мишшӑ! Колхоза йышӑнӗҫ-и, ҫук-и те, куншӑн тавтапуҫ! (*Упӑшкине ыталаса чуптуса илчӗ*).

Райски. Ну — хӗрарӑм а Кунта та хӑйӗннех турӗ.

Лҙошкӑ. Ҫапла ҫав, а есӗ улталанса йултӑн!

Хв. Уйар куҫарнӑ.

# „Капкăн“ Куйбышĕв крайĕнче



## Ахађ лариччен

Авалхи халапсенче пĕр каçра акăш-макăш ылтăн кĕперсем пулса ларнă пек, Сухари Матак йалĕнче те (Исаклă р., Куйбышĕв крайĕ), кĕске вăхăтсенчех калама çук пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Калăпăр, пайан çĕр пӳлĕмлĕ лаша вити йалăн пĕр хĕрĕнче ларат̆. Пĕрер ернелĕхе ăçта та пулин кайса килсен лашуна çавăтса пыран та — вите вырăнче йĕтем пек йап-йака. Çӳрет вара килнĕ çын йал тăрăх çухалнă витене шыраса. Чылайран тин вите йе йал леш вĕçĕнче, йе пĕр-пĕр анкартинче тупăнат̆.

Ытти чылай çуртсен историйĕ те çавнашкалах. Пĕр витене кăна султалăк хушшинче виçĕ вырăна куçарнă. Пушар сарайне тăваттăмĕш вырăна, т.ыт. те. Пуштăпа клуб çурчĕсем миçемĕш вырăна çитнин хисепне йалсовет председателĕ Артӳшкинпа колхоз председателĕ Йегорăвсем хăйсем те манса кайнă ĕнтĕ.

Кӳршĕ йалсем Сухари Матакĕ кунсерен тенĕ пек улшăнса пынинчен тĕлĕннине хирĕç Артӳшкин акăш-макăш тарăн шухăшлă çын пек тӳпенеле кăна пăхат̆.

— Çапла çав епĕр, — тет вăл такама питленĕ пек мăн кăмăллăн. — Ахађ лариччен кĕрĕк арки йăвала, тенĕ авалхи ватăсем. Ĕç çук чух колхозниксем найанланса кайасран çуртсем куçаратпăр... Шиклĕ шикленет, тенĕ пек Сухари Матак колхозникĕсем халĕ тухса çӳреме шикленеççĕ.

— Кайала тавăрăниччен çурт йе пĕр-пĕр анкарти хыçне кайса ларма, йе вуçех те çухалма пултарат̆, — теççĕ вĕсем.

— Çак икĕ тăм писмене (Артӳшкинпа Йегорăва) ахађ лариччен кĕрĕк аркисем йăваласа ларма Сухари Матакĕнчен урăх çĕреле куçарса каймасăр та ниçта тухса çӳрессĕм çук, — теççĕ теприсем.

## Кивве йулнă çилос

Пĕр кахалран авал:

— Ануна ма сухалама тухмастăн? — тесе ыйтнă.

Лешĕ:

— Ав çавă анана-и? Епĕ вăл анана виçĕмçулах сухаланине астăватăп та, кăçал сухаламасан та йурĕ терĕм, — тесе каланă, тет.

Каша йалĕнчи (Пухтел районĕ, Куйбышĕв крайĕ) „Хум“ колхоз, ыђăх апачĕ хăйĕнчен ытлашши мар пулнă пулсан та, иртнĕ çулта хывса хăварнă 2 шăтăк çилосне кивве хăварнă. Вĕсем ăна хĕлле те, халĕ те уçса пăхман, мĕнле хупласа хунă, çаплипех тăрат̆.

Колхоз кăçал пĕр тоннă çилос та хывман-ха.

— Мĕншĕн çилос тумастăр? — тесен:

— Пирĕн пĕлтĕрхи те икĕ шăтăк çилос пурха, — теççĕ правленирисем.

Колхоз председателĕ Тушкин йулташ пĕр-пĕр йанкăс кун „çилос хывас плана 100 проценчĕпех тултартăм“ тесе райçĕрпайне рапăрт пама шутласа шанма пулат̆.

Кашари Ел.

## Ĕмĕт, ĕмĕт!

Пĕр шăрăх кун, халăх хĕрсе çуртырри вырнă вăхăтра, Кив Йакађ хирне (Исаклă р.), малтан колхоз председателĕ Çемйанăв çăварĕнчен тухса, çакнашкал хыпарсем сарăлаççĕ:

— Кив Йакађ колхозникĕсем вађђи „Пушкăрт çулĕ“ таврашĕнче çаран илнĕ, тет...

— Çулакансен шучĕпе валеçмеле, тет.

— Пĕрлештермен ыђăхсем вађђи, тет.

— Утă тесен утмăл çухрăма та кайма пулат̆, — терĕç колхозниксем савăннипе. — Ку çывăхрискере пĕр самантрах кайса çулатпăр...

— Халĕрех кайар мар-и, йулташсем? Çынсем çулса кайасран шиклĕ...

Колхозниксем вырма пăрахса йала виркĕнчĕç. Пăртакранах пĕтĕм йал çынни тенĕ пек „Пушкăрт çулĕ“ текен çаранлăхала туртăнма тытăнат̆. Çава йăтма пултаракан ачасенчен пуçласа урисене сĕтĕрме пултаракан ватăсем таран пурте пур кунта. (Ара çулакансен шучĕпе валеçмеле тетçке-ха!).

Тырă вырассине манса пур халăх виçĕ кун та виçĕ каç утă çулат̆. Çын шучĕ пултăр тесе кĕрченипе хăйсен йăчĕсене манса кайа пуçланă карчăксемпе стариксем те, анчах çеç вунна-вуниккелле шутласа çитерме вĕреннĕ ачасем те çаран çинчех вĕтеленсе çӳреççĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр ăмăрту тапранса кайат̆ çаран çинче. Ĕнесене утăпа тăрантарса кашниннех хĕлле сĕт ытларах çийес килет вĕт...

Виçĕ кунтан çаранлăх утă капансемпе шатраланса йулат̆.

Инкек çине синкек, тенĕ пек йала çитсен каллех çĕнĕ хыпар:

— Утă колхозниксен ĕнисем валли те мар, çулакансен шучĕпе те валеçĕнмест — правлени лашисем валли пулат̆, — тесе пĕлтерет колхоз председателĕ Çемйанăв. — Кăçал пĕтмесен, тепĕр çул валли йулĕ... ытлашкине сутма та пулат̆...

Авал: „ĕçлессе ĕçле те, кайран пăрçа муклашки“ тенĕ пек, Кив Йакађ колхозникĕсем виçĕ кун асапланнишĕн, ултавçă Çемйанăвăн „сутма та пулат̆“ тенисĕр пуçне утă та, çур ырă сăмах та, ĕçкунĕсем те илеймерĕç.

Хађ ĕнтĕ колхозниксен А. С. Пушкин пек „ĕмĕт, ĕмĕт, ăçта-ши сан сĕтекĕ!“ — тесе кăшкăрмали кăна йулат̆.




**Кирлĕ кĕнекесем туйанма тăрăшман шкул директăрĕ.**

**— Начар мар библиотекă пулчĕ. Анчах пĕр отдел кăштах пушăрах-ха...**

# Кам айăплă?

I.

Кашни ҫын хăй йепле айăплă пулсан та „Епĕ айăплă тесе“ каламасть. Йепле те пулсан айăпне хăй ҫинчен сиресшĕн тăрăшать.

Анчах, епĕ сирĕн умра хамăн айăпсене пытарасшăн мар, тўррипе каласа парасшăн, мĕншĕн тесен епĕ профсойуз членĕ, 1936-мĕш ҫултанпа тăратăп. Мана профсойуз членне ытти профсойуз членĕсене ҫĕнĕ билет улăштарнă вăхăтра илчĕҫ. Ҫав сăлтав пулман пулсан тен епĕ хаљ те члена ҫырăнман пулăттăм, мĕншĕн тесен учрежденинче профсойузра тăман ҫынсем пулмала мар, тесе ăнлантарса пачĕ мана пирĕн местком пуҫлăхĕ. Вара епĕ хам та сисмерĕм, члена кĕрсе кайрăм. Ҫĕнĕ профсойуз билечĕ пачĕҫ. Мĕншĕн епĕ ĕлĕкрех члена кĕмен? Уншăн кам айăплă, Епĕ-и? йе пирĕн местком текенни-и?—Епĕ ăна пĕлместĕп.

II.

Епĕ кăҫалхи ҫулччен авланса арăмпа пурăнса курман. Тен епĕ халех авланман та пулăттăм. Ҫавăн пек тĕл лекрĕ. Кĕтмен ҫĕртен сиксе тухрĕ. Пулать вăл хăш чух ун пекки. Пĕрре, ĕлĕк ҫапла, хĕрсемпе каччăсем вăрмана ҫырла татма кайаҫҫĕ. Манăн та вĕсемпе йерсе кайас килет. Вĕсем мана илесшĕн мар, мĕншĕн тесен кашни мăшăрлă.

Манран пытанса тухса кайасшăн пулчĕҫ.Ҫук, кайаймарĕҫ. Епĕ ҫапах ҫырла кунтине йатса, хыҫĕсенчен лĕпсĕртеттертĕм. Темиҫе хутчен те:

— Йул, Куҫма! Асту, пур·пĕр епĕр сана вăрмана аташтарса хăваратпăр, — тесе хăратса каларĕҫ.

Епĕ ҫапах итлемерĕм, хыҫĕсеҫнчен йерсе кайрăм.

Вăрмана ҫитрĕмĕр. Пăхатăп: хай хĕрсемпе каччăсем манран мăшăрăн-мăшăрăн тарса пытанса пĕтрĕҫ. Епĕ пĕр пĕччен тăрса йултăм.

Кăшкăртăм-кăшкăртăм, никам та сас памарĕ. Вăрман тăрăх чупса ҫўресен-ҫўресен аташса кайрăм. Пуҫĕ ҫавăрăнакан сурăх пек, ниҫтала кайма пĕлмесĕр, пĕр вырăнта ҫавăрăнса тăратăп. Ҫўретĕп-ҫўретĕп те каллех ҫав вырăна ҫавăрăнса пыратăп. Хайар саспа уласа макăрса йатăм. Ҫук, никам та сас памасть. Ҫўресен-ҫўресен умран те упа, те кашкăр курăка чăштăртаттарса тухса тарчĕ. Хăра-

нипе шарри кăшкăрса йатăм. Çĕре лаплатса ӳкрĕм.

Каç пулчĕ. Çăмăр çăва пуçларĕ. Хам шыва чиксе кăларнă пек йĕп-йĕпе. Хам та пĕлместĕп, те шăннипе, те хăранипе сиксе чĕтретĕп.

Хĕвел анчĕ пулас. Вăрман ăшĕ тĕттĕмленчĕ. „Ăçта кайас? Пĕтрĕм ĕнтĕ. Çĕрле пурĕпĕрех йе упа, йе кашкăр тытса çийет", — тесе шухăшлатăп... Çапах вилес килмест. Йĕре-йĕре куççул тухми пулчĕ. Сас тытăнса ларчĕ, кăшкăрса та тухмаст.

Çĕрте ларма хăрушă. Çавăнпах пĕр лапсăрка, туратлă чăрăш шыраса тупрăм та, тăррине улăхса лартăм. „Ăнсăртран çывăрса кайсан та, ӳкес çук, тураттисем тытса чарĕç",—тесе шухăшласа ларатăп. Хама-хам çĕрти-çӳлтине хăвăрмасăр вăрçатăп, кăларĕç вĕт мана, ухмаха, ан пыр пурĕ-пĕр аташтарса хăваратпăр, тесе, çук, итлемерĕм. Кам айăплă ĕнте кунта? Хĕрсемпе каччăсем-и? Епĕ-и?..

Çурçĕр çитрĕ пулас. Кайăксем йурлама чарăнчĕç. Унта кунта вăрман тăманисем çеç ӳхлетеççĕ. Тата вăхăт-вăхăт тӳлек çил вĕрет. Йăвăç çулçисем пĕр вăхăта чăштăртатса калаçса илеççе те, каллех лăпланаççĕ. Сасартăк епĕ ларакан чăрăш айĕнче чăштăр-чăштăр сасă илтĕнчĕ:

„Пĕтрĕм, упа! Вăл ман шăрша сиснĕ те, мана тытма йăвăç тăрне улăхат", тесе йатăм. Турат çине, çӳлерех улăхса лартăм. Иглетĕп: çын сассисем мăкăр-мăкăр калаçаççĕ. Савăнса кайрăм: „Пĕр хĕрпе каччă ĕнтĕ кăсем. Киле тавăрăнман. Вăрмантах уллах вырăнта çĕр каçма йулнă, — тесе шухăшласа малала мĕн пуласса кĕтсе ларатăп. Хăрасси пĕтрĕ. Мăкăр-мăкăр калаçрĕç-калаçрĕç те, темĕскер çĕлеме пуçларĕç. Хăйсем чăш та, чăш тăваççĕ...

— Ну, йурĕ, пулчĕ,—терĕ пĕр сасă.

Ман çапах камсем иккенне пĕлес килет. Хам пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн турат çинчен турат çине айалала анатăп. Лешсем пĕрех айалта мăшăлтатаççĕ.

— Çутăлат. Аťа кайар ĕнтĕ. Лăплансан килсе илĕпĕр, —терĕ тепĕр сасă.

Çутăла пуçларĕ. Кăшт курăнат. Пăхатăп: хĕрарăм çук, иккĕшĕ те арçынсем. Авантарах паллас тесе, турат тăрăх шуса пырса пуçа кăларарах пăхма тăтăм. Хам та сисмерĕм, ман айри турат шатăрт турĕ. Епĕ çĕре лап перĕнсе антăм. Хам та сисмерĕм. Шари кăшкăрса йатăм. Хайхи çынсене курса çеç йултăм, лаша пек кĕпĕртетсе чупрĕç, хыçĕсенчен курăк çеç чаштăртатса йулчĕ.

Сиксе тăтăм. Ура пусма çук ыратат. Сыппи сикнĕ, пăхатăп вĕсем чăнах та шăтăк авăтса темĕскер пытарса хăварнă. Манран хăранипе тимĕр кĕреçине те пăрахсах тарнă.

Ман малала утма çук. Сыппи сикнĕ ура çав тери ыратат.

Çитменнине ăçтала каймалине пĕлместĕп. Вăхăт нумайах та иртмерĕ. Кăшкăрнă сасăсем илтĕне пуçларĕç.

— Куçма!..

Мана шырама тухнă тетĕп хам ăшăмра. Епĕ хирĕç çухăрнă хыççăн вĕсем мана часах шыраса тупрĕç. Ĕç мĕнле пулнине йĕркипе каласа патăм. Ара вăрăсем çав шăтăка кооператив лавкине çаратнă йапаласене пытарнă пулнă.

* * *

Манăн авлану та çапла кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ. Пĕрре çапла ĕçсĕр аптранă йенне кинона кайрăм. Фойе тăрăх калле-малле уткаласа çӳретĕп. Пĕр хура куçлă илемлĕ хĕрарăм кашни çаврăнмассерен хирĕç пулса йăл кулса илет. Епĕ хам та ăна хирĕç çемçен те ăшшăн пăхатăп. Чĕре ыйтнă тăрăхăн епĕ билетне те çав хĕрарăмпа йунашар илтĕм. Хай хĕрарăм шăп манпа йунашар пырса ларчĕ. Кино кăтартма пуçларĕç. Астумастăп. Тепле йатлă киноччĕ: хĕрпе каччă чуп тăваççĕ. Çавсене пăхса ларнипе хам та сисмен, йунашар ларакан хура куçа аллинчен йарса та илтĕм. Вăл ман алла тĕксе йарас вырăнне ывăç тупанчен вут хĕм тухас пек пăчăртарĕ, ман çумарах çыпăçса ларчĕ. Тута хĕррисене çу сĕрнĕ пек çемçен калаçатпăр.

— Мĕн йатлă есĕ тетĕп?—хура куçĕнчен пăхса. Унăн йачĕ Маруçă иккен. Манăн чĕре çумне сарă çу пек çыпăçакан йат.

Кино пĕтрĕ. Атăл хĕррипе уçăлса çӳретпĕр. Вăл ман алла тыта-тыта чăмăртат. Епĕ те ун хура куçĕ çине пăхса сарă çу пек ирĕлетĕп. Йулашкинчен ыран каçхине каллех курнăçмала сăмах татса уйăрăлтăмăр. Çапла вара кĕтмен çĕртен хура куçпа паллашрăм. Кашни каç курăнма пуçларăмăр: пирĕн пурнăç пыл та çу. Пĕрре çапла Атăл хĕрринче, хăйăр çинче, хĕвел питĕнче хĕрĕнсе выртнă чух: — Куçма, — терĕ мана Маруçă, — хăçан сан хватерна куçăп?

Тепĕр кун вăл ман хватере пĕтĕм йапалисемпе куçса пычĕ. Йышăнтăм... Çапла вăйран вăкăр тухат тенĕ пек пулчĕ. Пурăнатпăр ытти çынсем пекех. Çапла чип-чипер пурăннă вăхăтрах епĕр савнă арăмпала апатланса ларнă çĕре пĕр арçын кăшкăрса кĕрсе тăчĕ. Арçын ман çине чăр пăхса илчĕ те: — Маруçă, есĕ вара чăнахах çак шĕвĕре каччă тухрăн-и? — терĕ. Маруçă чăтаймарĕ, ури çине сиксе тăчĕ те:

— Тухса кай, малашне епĕ сан арăму мар. Епĕсанпа виçĕ çул нушаланса пурăнтăм. Виçĕ çулта виçĕ ача пăрахтартăн. Тăваттăмĕш хут „Куç ан куртăр" тесе икĕ уйăхлăха командировка тухса кайрăн, — епĕ килнĕ çĕре ача пăрах, — тесе хăвартăн. Çук! Епĕ урăх пăрахмастăп. Çуратăп. Анчах санпа мар, ак кампа, — терĕ ман çине кăтартса.

Тин чухласа илтĕм манăн Маруçă упăшкинчен уйăрăлнă иккенне.

Арçын урăх калаçмарĕ. Çавăрăнса тухса кайрĕ. Епĕ нимĕн те шарламарăм.

Иртрĕç кунсем. Маруçă хăй пекех хура куçлă хĕрача çуратса пачĕ.

— Ну, калăр кунта, епĕ телейлĕ-и, йе Маруçă?— тетĕп епĕ хама-хам унăн хура куçĕ çине пăхса.

Данилăв-Чалдун.

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*

Сдано в производство 29-VIII—36 г. Подписано к печати 29—IX—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 638. Заказ № 1528

Формат бумаги 58×88 1/16. Об'ем 2, 5 п. л. Гор. Чебоксары тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 4600. Изд. газ. „Канаш"

## Амăшĕпе ачи




— Анне, есĕ те пайан шкула кайрăн, епĕ те шкула кайрăм. Сана та буквар панă, мана та буквар панă. Уроксене давай пĕрле хатĕрлер!